24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

книж пол.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941
ИЮНЬ
20
ЭРНЕКУН
143 (5858) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН
УКАЗĔ

Чăваш АССР Верховный Совечĕн составĕнчен тухса ÿкнĕ депутатсем вырăнне уйрăм суйлав округĕсем тăрăх Чăваш АССР Верховный Советне çĕнĕ депутатсем суйламалли кун çинчен

Чăваш АССР Верховный Совечĕн составĕнчен тухса ÿкнĕ депутатсем вырăнне уйрăм суйлав округĕсем тăрăх Чăваш АССР Верховный Советне 1941 çулти июлĕн 20-мĕшĕнче çĕнĕ депутатсем суйламалла тăвас.

Суйлавсем пулмалли округсенче суйлав кампанийĕ 1941 çулти июнĕн 20-мĕшĕнче пуçланни çинчен пĕлтерес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн
Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕшĕн — Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиум Председателĕн Заместителĕ **А. КРАСНОВ.**

Шупашкар хули, 1941 çулти июнĕн 19-мĕш.

СУЙЛАВ КАМПАНИНЕ ОРГАНИЗОВАННО ИРТТЕРЕР

Паян эпир Чăваш АССР Верховный Совет составĕнчен тухса ÿкнĕ депутатсем вырăнне уйрăм суйлав округĕсем тăрăх çĕнĕ депутатсем суйласси çинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ кăçалхи июнĕн 19-мĕшĕнче кăларнă Указа пичетлетпĕр. Паянтан пуçласа ĕнтĕ çак Указ тăрăх пирĕн республикăри 12 район территорийĕнче уйрăм суйлав округĕсем тăрăх суйлав кампанийĕ пуçланать.

Пирĕн республикăри, уйрăмах депутатсен суйлавĕсем пулса иртмелли округсенчи, ĕççыннисем çак çитес суйлав кампанине калама çук питĕ пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илесси çинчен пĕр иккĕленмелли те çук. Суйлавсем пулса иртекен округсенчи ĕççыннисем Совет халăхĕн патриотизмне, хăйсем большевикла парти тата халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин тавра çирĕппĕн пĕтĕçсе тăнине татах тепĕр хут кăтартса парĕç.

СССР Верховный Советне, союзлă тата автономлă республикăсен Верховный Совечĕсене пирвайхи хут депутатсем суйланă хыççăн, коммунистсемпе беспартийнăйсен блокĕ иртнĕ çулта союзлă çĕнĕ республикăсенчи — Карело-Финн, Эстони, Латви, Литва, Молдаван республикисенчи, çавăн пекех Украинăпа Белорус СС Республикисен Хĕвеланăç облаçĕсенчи суйлавсенче те чаплă çĕнтерÿсем турĕ. Çаксем пурте вĕсем тĕнчери чи демократиллĕ Сталинла Конституцин—çĕнтерÿ тунă социализм Конституцийĕн аслă вăйне кăтартса паракан хăватлă демонстраци пулса тăчĕç.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн составĕнчен тухса ÿкнĕ депутатсем вырăнне уйрăм округсем тăрăх çĕнĕ депутатсем суйлас тĕлĕшпе пулас суйлавсем, халиччехи традици тăрăх, коммунистсемпе беспартийнăйсен союзĕн (блокĕн)—суйлав кампанине организованно тата ăнăçлă ирттерме май паракан шанчăклă вăйăн никĕсĕ çинче пулса иртĕççĕ.

Нимĕн иккĕленмелли те çук, Верховный Совета суйлавçăсем лайăх тĕрĕсленĕ, социализмлă тăван çĕршыва, совет халăхне, Ленин—Сталин ĕçне пĕтĕм чĕререн парăннине ĕçре кăтартса панă çынсене, государство ĕçĕнчи ленинла-сталинла сăнарлă работниксене суйласа ярĕç.

Вырăнти советсемпе парторганизацисен задачи акă мĕнре: суйлав кампанине мала тăрса ертсе пымалла, ăна пĕтĕмĕшпех Сталинла Конституци тăрăх тата политикăллă çÿлĕ пусăм çинче ирттермелле.

Çак суйлав кампанийĕ суйлав положенийĕнче палăртса хунă пек икĕ уйăх хушшинче мар, пĕр уйăх хушшинче пулса иртет. Çапла вара, суйлавсене хатĕрленмелли сроксем чакаççĕ. Суйлавсем пуçланиччен 20 кунран кая юлмасăр малтан хуласемпе ялсенчи советсен исполкомĕсем суйлавçăсен списокĕсене хатĕрлеме тата пурне те пăхма кăларса çакма тивĕçлĕ. Суйлав участокĕсене тăвас тата участоксенчи суйлав комиссийĕсене çирĕплетес ĕçе суйлавсем пуçланиччен 25 кунран кая юлмасăр малтан тумалла. Çак ĕçе хуласенче—хула совечĕсен исполкомĕсем тăваççĕ, ялла вырăнсенче—райсоветсен исполкомĕсем. Чăваш АССР Верховный Советне депутата суйлама тăратакан кандидатсене тивĕçлĕ суйлав комиссийĕсенче суйлавсем пуçланиччен 15 кунтан кая юлмасăр малтан регистрацилемелле, регистрациленĕ кандидат çинчен калакан даннăйсене тата кандидата тăратнă организацисен ячĕсене суйлавсем пуçланиччен 10 кунтан кая юлмасăр малтан пичетлесе кăлармалла. Вырăнти советсемпе парторганизацисем çак уйрăмлăха шута илме, суйлавсене организаципе техника енĕпе хатĕрленес ĕçе халех тытăнма, суйлав умĕнхи агитациллĕ ĕçе анлăн сарса яма тивĕçлĕ. Сталинла Конституци пирĕн çĕршыври организацисемпе ĕççыннисене çак агитациллĕ ĕçе тума анлă право панă.

СССР Верховный Советне виçĕ суйлав округĕ тăрăх депутатсем суйлас тĕлĕшпе пулса иртнĕ суйлав кампанийĕн опычĕ çакна кăтартса парать: организациллĕ-техникăллă хатĕрленÿре вырăнти Советсем чылай йăнăшсем тунă. Çакă тепĕр хут ан пултăр тесе, суйлавçăсен списокĕсене халех тĕрĕслеме тытăнмалла. Çак ĕçе тунă чух тĕп документсем вырăнне 1939 çулта вырăнти Советсен суйлавĕсем валли тунă списоксене илмелле, 1941 çулта национальноçсен Советне тата районсенчи Советсене уйрăм округсем тăрăх депутатсем суйланă вырăнсенче—çав суйлавсен докуменчĕсене илмелле. Списоксем йăлтах тĕрĕс пулмалла, вĕсенче пĕр йăнăш та пулмалла мар.

Суйлав участокĕсен пурлăхне (сасăламалли кабинăсене, суйлав ещĕкĕсене т. ыттисене те) тĕрĕслесе тухмалла, вĕсене пĕтĕмĕшпех йĕркелесе çитермелле, суйлавсем иртекен вырăнта пÿлĕмсем хатĕрлесе хумалла.

Тепĕр 5 кунран кая юлмасăр, участоксенчи суйлав комиссийĕсене туса çирĕплетмелле. Çапла вара, Сталинла Конституципе тата суйлав Положенийĕпе усă курса, обществăллă организацисем, предприятисем тата колхозсем суйлав кампанийĕн пирвайхи кунĕсенчех округсенчи тата участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне хăйсен представителĕсене тăратма тивĕçлĕ.

Суйлав кампанийĕн çитĕнĕвĕ мĕнле пулассине вăхăтра тата тĕрĕс организациленĕ большевикла агитаци, суйлав Положенине ăнлантарса пани, совет гражданĕсен аслă прависемпе обязанноçĕсем—Сталинла Конституципе çирĕплетсе панă правăсемпе обязанноçсем çинчен анлăн ăнлантарса пани татса парать. Çавăнпа та парти райкомĕсем агитаторсен составне тĕрĕслеме, вĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухма, квалификациллĕ инструкци пама, суйлав материалĕсене тата ытти кирлĕ материалсене тупса пама, вĕсене куллен-кун пулăшса пыма тивĕçлĕ.

Суйлав кампанине ирттерес ĕçре политпросветучреждениесем — вулав çурчĕсем, клубсем, библиотекăсем пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Вĕсенче кирлĕ пек литература пĕтĕмĕшпех пулмалла, калаçусем, докладсем, лекцисем ирттермелле, справкăсем парас ĕçе организацилемелле т. ыт. те. Районсенчи хаçатсемпе стена хаçачĕсем çине калама çук пысăк обязанноçсем ÿкеççĕ. Вĕсем суйлав кампанийĕ мĕнле пынине, агитациллĕ-массăллă ĕç опытне анлăн çутатса пыма тивĕçлĕ. Районсенчи хаçатсен çавăн пекех тата суйлав докуменчĕсене палăртнă сроксенче пичетлесе кăларасси çине те пысăк тимлĕхпе пăхмалла.

Суйлав кампанийĕнчи агитациллĕ ĕçе предприятисен, колхозсен, учреждениесен практикăллă задачисемпе, ĕç дисциплинине малалла çирĕплетес, ĕç тухăçлăхне хăпартас, продукцин хăйне тума ларакан хакне чакарас, тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартас, тасалăхпа йĕркелĕх туса хурас ĕçри задачăсемпе çыхăнтарса пымалла. XVIII партконференци решенийĕсене, колхозсенче тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановленине ăнлантарса парас тĕлĕшпе ĕçлени, çавăн пекех Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне ăнăçлăн сарни,—çаксем ĕнтĕ агитациллĕ-массăллă ĕçĕн çĕнĕ опычĕпе пуянлатрĕç. Производствăра стахановецсем пулса тăракан агитаторсем станок умĕнче, уйхир ĕçĕсенче, колхозсенчи фермăсенче тата ытти ĕçсенче тÿрĕ кăмăлпа, стахановла тăрăшса ĕçленине пирĕн çĕршывра мĕнле чысланине цифрăсемпе, фактсемпе кăтартса пачĕç. XVIII партконференци йышăннă решенисене, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти мартăн 13-мĕшĕнче йышăннă постановленине ăнлантарса парас ĕçре илнĕ опытпа пур çĕрте те пĕтĕмĕшпех усă курмалла.

Çакăнпа пĕрлех эпир халĕ пурăнакан вăхăтри тĕнчери йывăр обстановка çинчен тата, халăха мобилизациллĕ хатĕр тытса тăрас тесе, пирĕн Совет государствин хуçалăхпа оборона хăватне çирĕплетес ĕçри задачăсем çинчен тăтăшах ăнлантарса памалла.

Суйлав кампанине ăнăçлăн ирттернипе хамăрăн организованноçа, хамăр Ленин—Сталин партийĕ тавра тачă пĕтĕçсе тăнине татах тепĕр хут кăтартса парар!

Партин Чăваш АСС Республикинчи пуçламĕш организацийĕсенчи парторгăнсен суйлавĕсен итогĕсем çинчен

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн VII Пленумĕ йышăннă постановлени

«Пуçламĕш парторганизацисенчи отчетпа суйлав пухăвĕсен итогĕсем çинчен» ВКП(б) Обком секретарĕн Павлов юлташăн докладне итлесе сÿтсе-явнă хыççăн, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн VII Пленумĕ çакна палăртать: отчетпа суйлав пухăвĕсем ВКП(б) XVIII съезчĕн тата Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин решенийĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслес енĕпе, республикăри коммунистсемпе ĕççыннисене 1941 çулти халăх хуçалăх планĕн задачисене пурнăçа кĕртме малалла мобилизацилес енĕпе пулса иртрĕç.

Ертсе пыракан парторгăнсен суйлавĕсем пуçламĕш парторганизацисенче нумайĕшĕнче организованно тата активлă, идейăллă-политикăллă пысăк çĕкленÿпе, большевикла критикăпа самокритикăна анлăн сарнă никĕс çинче тата ВКП(б) Уставĕпе ЦК ВКП(б) суйлав çинчен кăларнă инструкцине пĕтĕмпех пăхăнса пынипе иртрĕç.

Пуçламĕш парторганизацисем суйлавсене ĕçре пысăк опыт пухнипе кĕтсе илчĕç. Вĕсем предприятисен, МТС тата колхозсен производствăллă пурнăçне тарăннăн пĕлсе çитсе, унта хутшăнма, çитменлĕхсене хирĕç çине тăрса кĕрешме пуçларĕç. Коммунистсен малта пырас рольне ÿстернĕ тата партиллĕ вăя тĕрĕс вырнаçтарса тунă пуçламĕш парторганизацисем уйрăмах пысăк ăнăçусем турĕç.

Çавăнпа пĕрлех ВКП(б) Обкомĕн VII Пленумĕ çакна палăртать: парторгăнсен суйлавĕсем пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕнчи тата ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕпе райкомсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене те кăтартса пачĕç.

Республикăри чылай пуçламĕш парторганизацисем халиччен те хăйсен ĕçне партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин решенийĕсем кăтартнă пек урăхлатса çĕнетеймен. Çавна пула Етĕрнери çу завочĕ, Шупашкарти тир-сăран завочĕ, Наркомлес предприятийĕсем, Буинскри сланецсен рудникĕ, республикăри тата ытти хăшпĕр предприятисем халĕ те производствăллă программăна тултармаççĕ тата çаплах штурмсемпе ĕçлесе пыраççĕ. Çак предприятисенче çаплах партиллĕ-политикăллă ĕç аялти вырăнта тăрать. Партин уйрăм организацийĕсем устав администрацин хуçалăхлă ĕçне контроллесе тăма хушнине пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Агитациллĕ-пропагандăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыракан организацисем те пур. Вĕсенче агитаци ĕçĕ витĕмлĕ пулса пымасть тата конкретлă хуçалăхлă-политикăллă задачăсене пурнăçа кĕртессипе çыхăнса тăмасть.

Плана пурнăçа кĕртсе пыракан предприятисенче те (Улатăрти паровозсем юсакан завод, Çĕмĕрлери тата Куславккари йывăç каскалакан комбинатсем, Етĕрнери спирт завочĕ т. ыт. те) çитменлĕхсене пĕтерсе çитермен-ха. Талăкри графика час-часах тултараймаççĕ, технологи дисциплинине пăсаççĕ т. ыт. те, парти райкомĕсем (Улатăр, Етĕрне, Йĕпреç, Канаш) коммунистсемпе комсомолецсем хушшинче партиллĕ-воспитаниллĕ ĕçе йĕркелесе ярассинче пуçламĕш парторганизацисене çителĕклĕ таран конкретлă пулăшса пымаççĕ.

Парторгăнсен суйлавĕсем çакна кăтартса пачĕç: нумай пуçламĕш парторганизацисем, партин Шупашкар хула комитечĕ тата райкомсем парти членĕн кандидачĕсене воспитани парас тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ, çавна пула облаçри парторганизацире учетра тăракан 3758 кандидатран 2780-шĕн кандидат стажĕн срокĕ тухнă. Юлашки пиллĕк уйăх хушшинче стаж срокĕ тухнă кандидатсен йышĕ хытă ÿссе кайрĕ. 1941 çулти январĕн 1-мĕшне вĕсем мĕнпур кандидатсен хисепĕнче 57 процент пулнă пулсан, 1941 çулти июнĕн 1-мĕшне вĕсем 72,7 проц. пулнă, уйрăм районсенчи парторганизацисенче стаж срокĕ тухнă кандидатсен процентĕ тата пысăкрах (Шупашкар хулинчи организацире — 76 проц., Вăрнар районĕнче — 81 проц., Сĕнтĕрвăрри — 77,7 проц., Сĕнтĕр — 76,4 проц., Ишлей — 76,4 процент т. ыт. те). Çаксем ĕнтĕ нумай пуçламĕш парторганизацисем тата партин уйрăм райкомĕсем кандидатсемпе ĕçлесси хăй тĕллĕн пулса пырасса шанни çинчен калаççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн Пленумĕ уйрăмах партин Элĕк тата Первомайски райкомĕсем тата партин чылай пуçламĕш организацийĕсем, — çакă вăл парторгăнсен суйлавĕсенче курăнчĕ, — коммунистсене марксистла-ленинла образовани парас ĕçе çаплах çителĕксĕр ертсе пынине палăртать. Çавăншкалах партин уйрăм райкомĕсен тата пуçламĕш парторганизацисен комсомол, профсоюз организацийĕсене тата ытти массăллă организацисене ертсе пырас ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пур.

Анчах отчетпа суйлав кампанийĕ пынă вăхăтра уйрăм пуçламĕш парторганизацисенче ЦК ВКП(б) суйлавсем çинчен кăларнă инструкцине пăснисем те пулнă.

Пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕнче палăртнă çитменлĕхсене ВКП(б) хăшпĕр райкомĕсем шута илмен тата вĕсене пĕтерес ĕçсене туман. Акă, сăмахран, ВКП(б) Октябрьски райкомĕ парторганизацисен суйлавĕсем хыççăн та районри парторганизацисенче партиллĕ-массăллă тата политикăллă ĕçсене çĕклес тĕлĕшпе тивĕçлĕ выводсем туман. Çак районра 14 пуçламĕш парторганизацирен 12-шĕнче суйлавсем хыççăн парти пухăвĕсене ирттермен.

ВКП(б) Обкомĕн оргинструкторски отделĕ организациллĕ-партиллĕ ĕçре ВКП(б) райкомĕсене вăхăтра тата çителĕклĕ таран пулăшу памасть.

ВКП(б) Обкомĕн Пленумĕ **çапла йышăнать:**

1. ВКП(б) Шупашкар хула комитетне тата райкомсене отчетпа суйлав пухăвĕсенче палăртнă çитменлĕхсене пĕтересинче пуçламĕш парторганизацисене кулленех практикăллă пулăш парса пыма, пуçламĕш парторганизацисенче, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVII конференцийĕн решенийĕсемпе кил шĕллĕн туса, партин шалти ĕçне тат партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăхлатма хушас.

2. Пленум парти райкомĕсене хăйсен решенийĕсене тата партин çулти органĕсен решенийĕсене пуçламĕш парторганизацисем тата уйрăм коммунистсем мĕнле пурнăçа кĕртсе пынин тăтăшах контроллеме хушать.

3. ВКП(б) Шупашкар хула комитет не тата райкомсене парторганизацисен партбюро секретарĕсемпе тата в сен заместителĕсемпе ĕçлессине организацилеме, парти строительстви тат партин практикăллă ыйтăвĕсем тăр семинарсем ирттерме, вĕсен политикăллă тата культурăллă ÿсĕмĕшĕн, в сен организациллĕ ĕçри рольне çĕ лессишĕн тăрăшса, вĕсене руководствăн большевикла стильне вĕрентм партиллĕ ĕçе хăнăхтарма хушат

4. Пленум ВКП(б) райкомĕсене пар бюро тата секретарьсен ĕçĕсене çит лĕксĕр тесе йышăннă пуçламĕш орга низацисене пулăшу пама кирлин уйрăмах кăтартса парать.

5. Пленум ВКП(б) Шупашкар ху комитетне тата райкомсене, кандида стажĕ витĕр тухасси ахаль формал ность кăна пулса ан тăтăр тес партиллĕ поручени сем парса тата па тиллĕ-политикăллă ĕçе активлăн ху шăнтарса, кандидатсене воспитани п рас ĕçе халех организацилеме та тăтăшах туса пыма хушать.

6. Пленум ВКП(б) Шупашкар ху комитетне тата райкомсене хăйсем е чен комсомол, профсоюз организац йĕсене тата ытти массăллă организ цисене вĕсен практикăллă ĕçĕнче ко кретлăн пулăшас тата ертсе пырас ĕ тĕпренех лайăхлатма хушать.

◆

Каллех Арктикăна!

И. И. Черевичный юлташăн вĕçекен кимми Мускавран тухса кайнă

Июнĕн 18-мĕшĕнче ирхине Совет Союзĕн Геройĕ Мазурук юлташпа пĕрле полярти авиаци работникĕсем полярти паллă пилота И. И. Черевичный юлташа Арктикăри çĕнĕ рейса ăсатса янă.

...Тинĕс çине анса ларма пултаракан «СССР Н—275» самолет çыранран уйăрăлса, Химкински водохранилищĕн центрне тухнă. 6 сехет те 45 минутăра икĕ моторлă сывлăш карапĕ, хăй хыççăн кăпăклă пысăк йĕр хăварса, сывлăша вĕçсе çĕкленнĕ. Черевичный юлташ тÿрех Арктика еннелле çул тытнă.

Вĕçсе çĕкленес умĕн И. И. Черевичный юлташ ТАСС сотрудникне çапла пĕлтернĕ:

— Эпĕ Лаптевсен тинĕсĕнчи тата Хĕвелтухăç Çĕпĕр тинĕсĕнчи пăрсене сăнаса çÿреме каятăп. Манпа пĕрле штурман Аккуратов, бортрадист Макаров, бортмеханиксем — Чечинпа Терентьев тата штурман дублерĕ — Низовцев вĕçеççĕ. Тиксирĕ пирĕн кимĕ çине Черепков куçса ларать, вăл иккĕмĕш пилот пулать.

Вĕçекен кимĕ çинче пулас вĕçевсем эпĕ кăçалхи çуркунне инçетри широтасем çинче вĕçсе çÿренисенчен чылай уйрăмрах. Ун чухне пуринчен ытларах пăрсен прогнозне тăвас тĕлĕшпе, Хĕвелтухăç Арктикăн халиччен тĕпчесе пĕлмен районĕсене сăнаса вĕренес тĕлĕшпе научнăй ĕçсем тумалла пулнă. Çак вĕçевре вара Çурçĕрти тинĕс çулĕпе хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăç еннелле тата хĕвелтухăçĕнчен хĕвеланăç еннелле каякан тинĕс карапĕсем валли çулсем шырамалла пулать. Пирĕн самолет питех те инçете вĕçме пултарать, çавăнпа та пĕр рейс вăхăтĕнче питех те анлă вырăнти пăрсене сăнаса тухма пулать. Пăрсене сывлăшран сăнаса вĕренни суднăсен капитанĕсене тĕрĕс çул тытса пыма пулăшать.

Çак расра эпир Арктикăра сентябрь уйăхĕн вĕçне çитиччен ирттерме шутлатпăр. (ТАСС).

* * *

АРХАНГЕЛЬСК, июнĕн 18-мĕш. (ТАСС). Паян кăнтăрла çитсен И. И. Черевичный летчик тытса пыракан «СССР Н—275» ятлă икĕ моторлă вĕçекен кимĕ Çурçĕрти Двина юханшывĕ çине, Архангельск çывăхне анса ларнă.

Паян техникумсене вĕренме илме пуçлаççĕ

Паян, июнĕн 20-мĕшĕнче, çĕршыври мĕнпур техникумсене вĕренме кĕрес текенсенчен заявленисем илме пуçлаççĕ. Кăçалхи çул техникумсене çĕнĕрен 350 пин студент илеççĕ, вăл шутран промышленность, транспорт тата строительство техникумĕсене — 100 пин çынна яхăн, медицина техникумĕсене — 80 пин çын, педагогика техникумĕсене — 75 пин çын.

Аслă шкул ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитечĕ вĕренме илмелли правилăсене çирĕплетнĕ. Техникумсене 7 çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнă, 15 çултан пуçласа 30 çула çитнĕ çынсене илеççĕ. Тулли вăтам шкултан — десятилеткăран, рабфакран, çитĕннисен шкулĕнчен вĕренсе тухнисене иккĕмĕш курса, пушă вырăнсем пур пулсан, испытанисĕрех йышăнаççĕ. Вĕренме кĕрекенсене пурне те медосмотр тăваççĕ, вĕсем суйласа илнĕ специальноçпа ĕçлеме юрăхлипе юрăхлă маррине палăртаççĕ. Испытанисем вăхăтĕнче пĕр предметпа кăна та пулин кирлĕ пек ответ парайманнисене техникума йышăнмаççĕ. Вырăс чĕлхипе мар, тăван чĕлхепе вĕрентекен шкулсенче вĕреннисем валли кăна çак требованине исключени йĕркипе сăмаллатма пултараççĕ. Çакăн пек çынсем испытанисем вăхăтĕнче вырăс чĕлхипе çителĕксĕр хак илнĕ пулсан, вĕсене техникума йышăнма пултараççĕ, анчах та иккĕмĕш семестр пуçламĕшĕ тĕлне вĕсем обязательнăй йĕркепех испытанисем пама тивĕçлĕ пулаççĕ.

Техникумсен заочно тата каçхине вĕренмелли отделенийĕсене вĕренме хăйсем суйласа илекен специальность тăрăх производствăра ĕçлекен çынсене кирек миçе çула çитнисене те йышăнаççĕ.

Хальхи вăхăтра çĕршыври 3.690 техникумра 800 пин студент ытла вĕренет. (ТАСС).

Советлă Кишиневăн сăн-сăпачĕ

Румыния оккупацилесе пурăннă çулсем хушшинче Кишиневри халăх хисепĕ 50 пин çын чухлĕ чакнă. Советлă çĕнĕ республикăн çамрăк столицинчи халăхăн хисепĕ пĕр çулталăк хушшинче 85 пин çын чухлĕ ÿсне, 200 пин çынна çитнĕ.

Кишиневра искусствăпа культура учрежденийĕсем сахал мар ĕнтĕ. Халăх творчествин çуртĕ, консерватори, изобразительнăй искусствăсен музейĕ уçăлнă. Культура дворецне тата чаплă гостиницăна туса пĕтереççĕ. Государствăн оперăпа балет театрне тăваççĕ, вăл 7 миллион тенке ларать.

Пуçламĕшпе вăтам шкулсем, нумай техникумсем, 3 институт — педагогика, учительсен тата ялхуçалăх институчĕсем, çĕнĕрен 6 поликлиника, 4 амбулатори, çавăн чухлех ачасен консультацийĕсем, ачасен 17 сачĕ уçăлнă. Хальхи вăхăтра хулара 303 врач ĕçлет. Румынсем хуçаланса пурăннă вăхăтра государство службинче 19 врач кăна пулнă.

Кишиневра 20 çул ытла вăхăт хушши нимĕнле çуртйĕр те туман. 1941 çулта кунти çĕнĕ строительство валли 30.500 пин тенкĕ панă.

Профсоюзпа комсомол кросĕ

„Большевик“ спорт обществинче

«Большевик» спорт обществине государство учрежденийĕсен, финанспа банк, политпросвет тата судпа прокуратура работникĕсен профессиллĕ союзĕсем кĕреççĕ. «Большевик» спорт обществи енĕпе, 17 районран тата Шупашкар хулинчен илнĕ сведенисем тăрăх, кроса 616 çын хутшăннă. Вĕсенчен 435 çын ГТО значокĕн нормисене панă. Первомайски, Красноармейски, Вăрмар, Шупашкар тата Октябрьски районĕсенчи профсоюз организацийĕсем кроса ăнăçлăн ирттереççĕ. Вăл районсем профсоюзсен облаçри комитечĕсем панă контроллĕ заданисене ытлашшипех тултарнă. Çакна вĕсем кроса ирттерме малтанах лайăх хатĕрленнипе çеç тума пултарнă. Çÿлте асăннă районсенче профсоюз членĕсене пурне те тренировкăсене явăçтарнă тата медицина комиссийĕнче тĕрĕсленĕ.

Красноармейски районра кроса 41 çын хутшăннă, вĕсенчен 35 çын ГТО нормине панă. Первомайски районра 3 кун хушшинче кроса 74 çын хутшăннă, вĕсенчен чылайĕшĕ ГТО нормисене панă. Вĕсем профсоюз членĕсене кроса хутшăнтарас тĕлĕшпе халĕ те лайăх ĕçлесе пыраççĕ, ялсовет работникĕсене, вулав çурчĕн заведующ йĕсене, налог агенчĕсене пурне кроса хутшăнтарассишĕн кĕрешеç Мĕншĕн тесен, ялсоветсенчи работни сен йышĕ пирĕн республикăра пĕчĕ мар, 2000 çын ытла шутланать.

Малта пыраканĕсемпе пĕрлех крос юлса пыракан районсем те сахал ма Вĕсен хисепне Сĕнтĕрвăрри, Улат Кувакино, Куславкка, Шăхасан та Йĕпреç районĕсене кĕртмелле. Çак р йонсем июнĕн 19-мĕшне çитсе те «Бол шевик» обществи енĕпе пĕр çынна кроса кăларман.

Улатăр районĕ профсоюз членĕсе кроса хутшăнтарас тĕлĕшпе нимĕн тумасть. Профсоюзсен обкомĕсен хă сен енĕпе Улатăр районĕ пирки хал тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Профсоюзпа комсомол кросĕ халĕ анлăн сарăлса пымалли вăхăт. Комсомолецсемпе профсоюз членĕсен пу рăвĕ пысăк, вĕсем кроса хутшăнасшă Пирĕн çав пуçарăва пурнăçа кĕрт тăрăшмалла. Ăмăртусем ирхине те ка сенче те, ĕç хыççăн кашни кунах пу са иртмелле. Çавăн пек пулсан ç эпир малти рете тухма пултаратпăр.

С. АСТАФЬЕВ.

Ялти комсомолецсем патĕнче

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Еншик Чуллă участокĕнче пилĕк ялсоветĕнчен комсомолецсемпе профсоюз членĕсем кроса 180 çын хутшăннă. Кроса хутшăннисенчен 1000 метр чупассипе 165 çын ГТО комплексĕн нормине панă.

П. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти педучилищĕре

Шупашкарти педучилищĕре про союзпа комсомол кросне 110 çын ху шăнса 99 çын ГТО значокĕн норми панă. Вĕсенчен чылайĕшĕ комсомоле сем.

Кросра Павлов, Риванов, Ефрем юлташсем мала тухнă.

Н. РАЕВ.

Физкультурниксен Пĕтĕм Союзри Кунĕ умĕн

Карагандăри çамрăксем физкультурниксен Пĕтĕм Союзри Кунне кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. ФЗО шкулĕнче вĕренекенсем валли çĕнĕ стадион тунă. Ремесленнăй училищĕре вĕренекенсем валли пысăк стадион тăваççĕ. Хальхи вăхăтра хулара çăмăл атлетикăпа массăллă ăмăртусем ирттереç волейбол, баскетбол вăййисенче пĕ ремĕш вырăна тухассишĕн ăмăртаç Хулари мотоциклистсем физкультурни кунĕ ячĕпе пысăк ăмăртусем ирттер хатĕрленеççĕ.

Профсоюзпа комсомол кросĕ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: дистанцире.
Г. КОСТИН фото-ÿкерчĕкĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Çамрăк коммунистсем пример кăтартаççĕ

ЕТĔРНЕ, ВКП(б) XVIII съезчĕ пулса ртнĕренпе партин районри органиацийĕ чылай ӳсрĕ. Парти ретне предриятисенче тата колхоз производтвинче стахановла ĕçлекенсем кĕреçĕ.

«Комбайн» колхоз членĕ Евграфов лташ нумай çулсем хушши колхозра ригадир пулса ĕçленĕ. Вăл ертсе пыакан бригада яланах малти ретре ынă. ВКП(б) райкомĕ Евграфов юлаша парти кандидатне илнĕ. Колхозиксем каярахпа Евграфов юлташа колоз председательне суйланă. Çĕнĕ ĕçе вăл хăюллăн тытăнчĕ. Колхоз часах айонри малта пыракан колхозсен утне кĕчĕ. Халĕ колхозра 4 ферма. ĕсенче выльăх-чĕрлĕхсем планпа ăхнинчен ытлашшипех пур. Иртнĕ улта колхоз кашни гектар пуçне -шер центнер тĕштырă туса илнĕ. олхозра халĕ пулă, хурт-хăмăр ĕрчееççĕ. Колхоз ӳссе пырать.

Стрелецкинчи Буденный ячĕпе тăраан колхозри бригадирсенчен нумаĕшĕ коммунистсем. Коммунистсем ртсе пыракан бригадăсем пур ĕçре те алта пыраççĕ. ВКП(б) кандидачĕ . Горбунов ертсе пыракан бригада йрăмăнах лайăх ĕçлет. Кăçалхи çураи планне бригада 6 кун хушшинче урнăçларĕ. Çавнашкалах «Родина» олхозра та парти кандидачĕ Баранов ртсе пыракан бригада малта пыать.

Мăн Йĕкĕт ялсоветĕ финанс планне ултарас тĕлĕшпе юлса пыракан яловетсенчен пĕри пулнă. Ялсоветра инагент пулса ВКП(б) кандидачĕ . Петров юлташ ĕçлеме пуçланăран ара ĕç лайăхланчĕ. Ялсовет иртнĕ улхи укçа-тенкĕ пухас плана райони чи малтан тултарчĕ. Халĕ те плана варталтан квартала ытлашшипех тул арать.

Я. СОРОКИН.

Парторганизаци коммунистсен сĕнĕвĕсене пурнăçласа пырать

ЭЛĔК. Юçкассинчи пуçламĕш арторганизаци отчетпа суйлав пухăвĕ арса хăварнă сĕнӳсене практикăллă çре пурнăçа кĕртсе пыма тытăнчĕ. Оетпа суйлав пухăвĕ пулса иртнĕрене, уйăх çурă хушшинче, колхозникене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен артипе правительство йышăннă посановленине парторганизаци тĕплĕн нлантарса панă, çак решенине колозра пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине ĕрĕслесе тăрать.

Коммунистсем хăйсен политикăллă ĕлӳлĕхĕсене ӳстерсе пырас тĕлĕшпе ăрăшса ĕçлеççĕ. Парторганизацинче арти членĕсем 4 çын, парти членĕн андидачĕсем 2 çын. Вĕсенчен Тиховв, Михайлов, Александров, Зотиков, лексеев юлташсем парти историне ăйсем тĕллĕн вĕренеççĕ.

Пуçламĕш парторганизацин секретаĕ Тихонов юлташ коммунистсен пухăĕсенче йышăннă решенисене пурнăçа ĕнле кĕртсе пынине кулленех тĕрĕсесе тăрать. Парторганизаци çураки инчен пухура сӳтсе-явнă хыççăн çав ешенине пурнăçлас майпа Тихонов лташ «Комбайн» колхозра çине тăах ĕçлерĕ, колхозниксене çураки заачисем çинчен тĕплĕн ăнлантарчĕ. гитаторсемпе стена хаçат редакторĕсене кулленех пулăшса, вĕрентсе пыать. Вĕсене пухса, май уйăхĕнче 2 утчен канашлу иртерчĕ. Çапла ĕçлеипе «Комбайн» колхоз çуракине 4 кун ушшинче вĕçленĕ, тĕштырăсене пыăк пахалăхпа акса хăварнă.

А. ФЕДОРОВ.

ВКП(б) Элĕк райкомĕн инструкторĕ.

XVIII партконференцин решенийĕсене мĕнле пурнăçласа пыратпăр

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ пулса иртнĕренпе пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕсем чылаях лайăхланчĕç. Парти райкомĕн инструкторĕсем тата пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем производство ыйтăвĕсемпе ытларах интересленме, коммунистсен пухăвĕсенче предприятисен ĕçĕсем çинчен тĕплĕнрех сӳтсе-явма тытăнчĕç. Мĕнпур партиллĕ-массăллă ĕç предприятисен ĕçĕсене лайăхлатас шутпа пулса пырать.

Пуçламĕш парторганизацисем производство ыйтăвĕсене сӳтсе-явнă чухне конкретлă решенисем йышăнакан, предприяти руководителĕсенчен тата коммунистсенчен çирĕпрех ыйтакан пулчĕç. Кунсăр пуçне малтан йышăннă решенисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăрасси вăйланчĕ.

Древкомбинатри пуçламĕш парторганизаци XVIII партконференци хыççăнах хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетме тытăнчĕ. Халĕ кунта цехсенчи агитаторсен составне пăхса тухнă, цехсенче агитаторсем пулса ĕçлеме производствăра лайăх ĕçлекенсене, хăйсен ĕçĕнче пример кăтартакансене уйăрнă. Цехсенче XVIII партконференцин решенийĕсене ăнлантарса парас тĕлĕшпе 130 агитатор ĕçленĕ.

Цехсенчи парттруппăсем хăйсен пухăвĕсенче цехсенче тасалăхпа йĕркелĕх тăвасси çинчен сӳтсе явнă, материалсемпе оборудованисене учета илме комиссисем тунă.

Хальхи вăхăтра партбюро цехсенчи парттруппăсене кулленех пулăшса ертсе пырать. Ĕç дисциплинине тата талăкри графика пăснă кашни тĕслĕх çинчен цехри парттруппăра тата партбюрора сӳтсе-яваççĕ. Сăмахран, май уйăхĕнче Кузьмин электромонтер айăпĕпе лесопильнăй рама 40 минута хушши простой тунă. Çав кунах Кузьмин юлташ çинчен партбюрора сӳтсе-явнă, ăна хăй ĕçĕ çине çиелтен пăхни çинчен асăрхаттарнă. Администраци те хăй енчен Кузьмин пирки тивĕçлĕ мера йышăннă.

Комбинатра инженерно-технически работниксен, цех начальникĕсен тата мастерсен канашлăвĕсене тăтăшах ирттересси йăлана кĕнĕ, техникăна вĕренес ĕçе йĕркеленĕ, стахановла шкул организациленĕ.

Çакăн пек ĕçленине пула пуçламĕш парторганизаци паха çитĕнӳсем турĕ, комбинат пĕрремĕш квартал планне 105 процент ытларах, пилĕк уйăхри производство программине 107 процент ытларах тултарнă. Ĕç тухăçлăхĕ ӳсрĕ. Коммунистсем Галин, Грачев, Кондратьев, Афонин тата ытти юлташсем те хăйсен нормисене кунсеренех ирттерсе тултараççĕ.

XVIII партконференци лартнă задачăсене пуçламĕш парторганизаци пĕтĕмпех татса парайман-ха. Комбинат плана ассортиментсемпе комплектсем тăрăх тултарса пыраймасть, талăкри графиксем пурнăçа кĕмеççĕ. Апрель уйăхĕнчен пуçласа пур цехсем те график тăрăх ĕçлеме тытăннă, анчах чылай чухне малтан палăртнă графиксем пурнăçланмаççĕ. Сăмахран, апрель уйăхĕнче пĕрремĕш номерлĕ цех пĕрремĕш вунăкунлăхри плана 83,92 процент, иккĕмĕшĕнче — 119,9 процент, виççĕмĕшĕнче—136,2 процент тултарнă. Ессем май уйăхĕнче тата начартарах пулнă. Малтанхи вунăкунлăхра плана 13 процент, иккĕмĕшĕнче—32,6 процент, виççĕмĕшĕнче—54,3 процент кăна тултарнă. Çапла вара уйăхри плана 91 процент çеç пурнăçланă.

Планировани тата график ĕçне лайăхлатасси çинчен техникăллă канашлусенче тата актив пухăвĕсенче темиçе те сӳтсе-явнă. Çавах та татăклă улшăнусем туни курăнмасть. Цехсем плана йĕркеллĕ тултарса пыраймании вăл цехсене кирлĕ чухлĕ пайсене малтан хатĕрлемменнинчен килнĕ. Халĕ çак çитменлĕхе пĕтерсех пыраççĕ.

Комбинат коллективĕ çулталăкри плана срокчен тултарас тĕлĕшпе кĕрешĕве тухнă. Çак кĕрешӳре уйрăм коммунистсем пример кăтартаççĕ. Акă, стахановец Ширяев юлташ кулленхи нормăна 200 процент, Данилова—132 процент, Козлов—185 процент, Фионов — 200—300 процент, Николаев 152 процент тултарса ĕçлеççĕ. Çулталăкри плана тултарассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва партбюро тивĕçлипе пуçарса ертсе пырать.

Парторганизаци тăрăшнипе пула комбинатри обществăллă организацисен ĕçĕсем лайăхланаççĕ. Комсомол пуçламĕш организацийĕ, малтанхипе танлаштарсан, чылаях аван ĕçлекен пулчĕ. Комсомолецсем ăмăртаççĕ, производствăра аван примерсем кăтартса ĕçлеççĕ.

«Большевик» заводри пуçламĕш парторганизаци XVIII партконференцийĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе хăшпĕр утăмсем тунă. Завод виçĕ уйăх хушши ĕнтĕ плана йĕркеллĕ тултарса ĕçлет. Апрель уйăхĕнчи плана 107,8 процент, май уйăхĕнче—107 процент ытларах тултарнă. Çавах та завод ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсемех пур. Апрель уйăхĕнче парторганизаци чылай çитменлĕхсене палăртрĕ. Скумпи цехĕнче продукцин хăйне ларакан хакĕ планпа пăхнинчен 2,7 процент ӳснĕ. Пĕрремĕш кварталта ĕçукçи фондне ытлашши расходланă. Çак ыйтусене пуçламĕш парторганизацинче тата парти райкомĕнче сӳтсе-явнă. Çавăн хыççăн пуçламĕш парторганизаци çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлерĕ. Чăн та, скумпи цехĕ пулнă çитменлĕхе тӳрлетрĕ, продукцин хăйне ларакан хакне май уйăхĕнче 1,92 процент таран чакарнă.

Ку вăхăтчен вăрман отделĕ начар ĕçленĕ, вăл май уйăхĕнче хăйĕн планне 14,8 процент кăна тултарнă. Партбюро вăрман отделĕн руководствине çĕнетес пирки решени йышăннă, ăна пурнăçа кĕртнĕ.

«Труженик» завод лайăхрах ĕçлеме тытăнни сисĕнет. Завод юлашки икĕ çул хушши тата 1941 çулти пĕрремĕш кварталта плансене тултарайман. Çакă вăл заводра политикăллă-массăллă ĕçе йĕркелеменнинчен, пуçламĕш парторганизаци социализмлă ăмăртăва пуçарса ертсе пыманнинчен пулнă.

Парти райкомĕн бюровĕ завод ĕçĕсем пирки сӳтсе-явнă, пуçламĕш парторганизацине хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетме хушнă. Паллах, çакăн хыççăн парт организаци производство ыйтăвĕсемпе тимлесе ĕçлеме пуçăнчĕ.

Калас пулать, чылай предприятисем халĕ те производство заданийĕсене йĕркеллĕ тултараймаççĕ. Сăмахран, çу завочĕпе çăкăр завочĕ начар ĕçлеççĕ. Çак фактсем парти райкомĕ тата унăн инструкторĕсем предприятисен ĕçĕсене çителĕксĕр контроль туса тăнине кăтартса параççĕ.

XVIII партконференци парторганизацисене промышленноçпа транспорт енелле татăклăнах çавăрас пулать, тесе хушса хăварчĕ. Анчах парти райкомĕ çак кăтартăва пурнăçа кĕртнĕ теме çук-ха. Инструкторсем пуринчен ытларах ялхусалăх ыйтăвĕсемпе ĕçленĕ, промышленноçпа çыхăннă ыйтусене çавăрăнса пăхнă. Çакна халĕ тӳрлетнĕ теме пулать. Кашни инструктор çумне уйрăм предприятисем çирĕплетнĕ, кашни инструктор хăйне панă участокшăн ответлă.

С. САВАДЕРОВ.

ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн оргинструкторски отдел заведующийĕ.

Профсоюзпа комсомол кросĕ. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Шупашкарти культурăпа кану паркĕнче çамрăксем ăмăртса чупаççĕ.

К. БАБАЕВ фото-ӳкерчĕкĕ.

Директор ятне илтме тивĕçлĕ-и?

ЭЛĔК. Чылай çулсем хушши Крымзарайкăри туллимар ватăм шкул директорĕ пулса Иван Егоров ĕçлет. Шкулăн икĕ гектар ытларах çĕр участокĕ пур. Вăл çĕр тупăшĕ пĕтĕмпех шкул хуçалăхне юсанă çĕре каймалла. Анчах директор ку çĕрпе мĕнле усă курасси çинчен учительсен канашлăвĕнче пĕрттĕ калаçмасть, хăй пĕлнĕ пек «йĕрке» туса пырать. 1940 çулччен чылай хушă çĕр тупăшĕпе хăй усă курса пурăннă. Унăн 1940 çулшăн ревизи тунипех 30 пăт ыраш, 29 пăт сĕлĕ тата укçа тухмарĕ.

Кăçал икĕ сменăпа 4-мĕшпе 2-мĕш классем пĕр çуртра вĕренчĕç. Çурчĕ пĕчĕккĕ. Кĕркунне районри совет исполкомĕ Хурăнсурти шкула Крымзарайка шкулĕ çумне пĕрлештернĕ пирки вăл çурта Крымзарайкăна куçармалла, тесе йышăнчĕ. Çакăн хыççăн шкул çуртне турттарма лавсем те тупса панă. Шкулăн вăл çурта лартма укçа-тенкĕ çителĕклех пулнă. Вăл ĕçе директор хăй çине илчĕ. Анчах çурта çуррине турттарса килсенех ун çинчен манса каять. Темĕн чухлĕ пĕренесем çухалса пĕтеççĕ. Халĕ те вăл пĕренесем сапаланса çĕрсе выртаççĕ, строительство ĕçĕ пымасть.

Директор учительсен пурнăç условийĕсене юсас тĕлĕшпе нимĕн те ĕçлемест. Иванов учителе хĕлĕпех çĕклемшерĕн кашни кун хутмалăх вутă парса тăчĕ. Кунтан та ытларах, вăл, учительсен авторитетне путарас шутпа, майăн 1-мĕшĕнче Иванов учителе хăй патне чĕнсе илсе каять те, ним пĕлмиччен ĕçтерет. Кайран тула астарса кăларса, çурхи шыв ăшне пăрахать. Çапла вара Егоров директор хăй чăнчăн ĕçне манса, ачасен пĕлĕвне хăпартассишĕн тата учительсемпе ĕçлессишĕн тăрăшмасть.

Е. ЕГОРОВ.

Куçса çӳрекен хĕрлĕ ялав панă

ЕЛЧĔК. Юлашки вăхăтра районра государство страхованийĕн ĕçне чылаях лайăхлатнă. Страховой инспектор Тимофеев юлташ страховани ĕçĕсене питĕ тăрăшса тăвать. Страховани ĕçĕпе Елчĕк районĕ халь республикăри ытти районсенчен малта тăрать.

Çавна шута илсе, Чăваш АССР Госстрах управленийĕн тата финанспа банк работникĕсен профсоюз обкомĕн куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавне халĕ Елчĕк районне панă.

Çаратусемпе растратăсене тĕп тумалла

Юлашки вăхăтра пулса иртнĕ суд процесĕсем государствăн тата кооперацин хăшпĕр организацийĕсенче халăх пурлăхĕ, социализмлă харпăрлăх япăх сыхланни çинчен палăртнă.

Пирĕн партипе правительство социализмлă суту-илӳ работникĕсене кулленех пысăккăн пулăшса пыраççĕ. Суту-илӳ работникĕсен тĕп масси партипе правительство культурăллă суту-илӳ тума кирли çинчен кăтартса панине тĕрĕс ăнланса илнĕ. Суту-илӳ работникĕсем хушшинче стахановла ĕçлекенсем сахал мар. Вĕсем халăх пурлăхне çаратакансене хирĕç кĕрешеççĕ. Анчах та суту-илӳ работникĕсем хушшинче жуликсемпе вăрăсем те тĕл пулаççĕ, вĕсем суту-илӳ организацийĕсенче киревсĕр ĕçсем тăваççĕ.

Чăваш АССР государство суту-илӳ организацийĕсенче тата потребкооперации системинче пурлăха çаратакансене тата растратчиксене чылай тупса палăртнă, анчах çав вăхăтрах çĕршер пин тенкĕлĕх пурлăха çаратса пĕтернĕ жуликсенчен пĕр пус та шыраса илмен.

Уйрăмăнах леспродторг системинче учет ĕçне япăхтарса янă. Çавăнпа та ĕнтĕ кунта çаратусем, растратăсем ӳссе пыраççĕ. Çĕмĕрлери леспродторг отделенинче 25.653 тенкĕлĕх çарату тата растрата пулнă. Шăмăршă районĕнчи çав системăрах 16.679 тенкĕлĕх растрата тунине палăртнă.

Чăвашпромсоюзăн Шупашкарти промкоопстрой артелĕнче хуçасăрлăх, тирпейсĕрлĕх пуçпулса тăрать. Çавна пула стройматериалсене çаратаççĕ. 1940 çулта артель 76 пин тенкĕлĕх сиен курнă. 1940 çулти çуркунне артель Мари республикинчи Юрински районра 14 пин тенкĕ парса çурт илнĕ пулнă, анчах та айран çав çурт «çĕтнĕ», ăна тупайман. 15 пин штука кирпĕчрен çурри кăна юлнă, ыттисене вăрласа пĕтернĕ. Гортопран илнĕ çĕршер кубометр йывăçа вăхăтра турттарса килеймен, юлашкинчен çак йывăçа вăрласа пĕтернĕ. Артельре завхоз пулса ĕçленĕ Пашкова Абалдуев çинче вунă пине яхăн растрата шутланать, анчах артель руководителĕсем çак укçана шыраса илес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Çаксене пулах ĕнтĕ артель калама çук пысăк тăкаксем курать, рабочисем виçтăват уйăхшăн ĕçукçи илеймесĕр пурăнаççĕ.

Иртнĕ çулта «Пекарь» артельте вăрă шайкине (Желонин, Ксенофонтов) шыраса тупнă. Вĕсем, жуликла мелсемпе ĕçлесе, иртнĕ çулла хăйсен кĕсйине пайтах укçа чикнĕ. Çав укçапа вĕсенчен пĕри 50 пин тенкĕлĕх, тепри — 30 пин тенкĕлĕх пӳрт туса лартнă. Обыск тунă чухне пĕрин патĕнче 15 пин тенкĕ укçа тупнă.

Суту-илӳ тата кооперации организацисен хăшпĕр руководителĕсем кадрсене суйласа илесси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмаççĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ суту-илӳ организацисене сиенлĕ элементсем хĕсĕнсе кĕреççĕ. Хăшпĕр чухне вăрăсене, растратчиксене пĕлсе тăнă çĕртех ĕçе илнĕ тĕслĕхсем те пур. Ĕçе илессине хуçалăх руководителĕ мар, кĕçĕнрех работниксем туса пыраççĕ. Етĕрне сельпоне инкассатор пулса ĕçлеме растрата тунăшăн 2 çул тĕрмере ларса тухнă, паспортсăр тата ытти документсăр çынна — Захарова илнĕ пулнă.

Чăваш Заготзерно системи те çаратусемпе, растратăсемпе пайтах варалланнă. Социализмлă харпăрлăха çаратакансен виçĕ группине тупса арестленĕ. Склад заведующийĕ Савинов ертсе пынă 6 çынтан тăракан группăна тĕп тунă. Вĕсем 13.954 тенкĕлĕх продукци çаратнă. Тата ытти икĕ группи те пысăк сиен кӳнĕ.

Шупашкар чугунçул станцинче грузсене хурал тăратса сыхлассине начар йĕркеленĕ. Çавна пула чылай грузсене çаратнă. Складра ĕçлекенсем хушнă ĕç çине çиелтен çеç пăхнă. Çакăнпа усă курса, вăрăсем таварсене вăрланă. П. Волков, С. Кондратьев, А. Серов тата Титов вăрăсен группи 3000 тенкĕлĕх тавар вăрланă.

Организацисен тимсĕрлĕхне пула, вăрăсем тĕрлĕ майсемпе усă кураççĕ. Сăмахран, Первомайски районри Кивĕ Эйпеç çынни Тукмаков сельпо магазинĕнчен 1.365 тенкĕ укçа вăрланă. Следстви çакна кăтартса панă: вăрă урай хăмине уçса кĕнĕ. Мĕншĕн тесен, урай хăмисене пăтапа çапса хытарман, вĕсене çăмăллăнах хăйпăтса кăларнă. Çитменнине тата хуралçă та пулман. Çакăн пек тĕслĕхсене сахал мар илсе кăтартма пулать.

Çаратусем, растратăсем, вăрланисем мĕн сăлтавпа пулса пыраççĕ-ха? Унăн сăлтавĕ пуринчен ытла, предприятисен, учрежденисен хăшпĕр руководителĕсем хăйсен кадрĕсене пĕлменнинче, вĕсен ĕçне контроль туса тăманнинче. Урăхла каласан, вĕсем çынăн анкетисем çине кăна пăхкалаççĕ, вăл мĕнле çынне пĕлмеççĕ.

Вĕсем хăйсене шанса панă материаллă пурлăх çине çăмăл ăспа пăхаççĕ, хуралçăсене тĕрĕслемеççĕ. Хăшпĕр чухне хуралçă пулма инвалида тухнă çынсене илеççĕ. Ревизи комиссийĕсем подотчетнăй лицосене контроллессинчен пăрăнса кайнă. Çарату, растрата ăçта пулса пырать, çавăнта ревизи комиссийĕ нимĕн те ĕçлемест.

Растратчиксемпе вăрăсене пурне те тăрă шыв çине кăларса, вĕсене ĕçрен кăларса ярассине, çийĕнчех ответ тыттарассине тата сиен кӳнĕ укçана пĕтĕмпех шыраса илессине йĕркене кĕртме вăхăт ĕнтĕ. Вăрланăшăн, растрата тунăшăн судлашнă çынсене ĕçре шанмалла мар. Тĕпчесе пĕлмен çынсене магазинсем, складсем, кассăсем патне яхăнне те ямалла мар.

Суту-илӳ организацисенче пĕр уйăхшăн оперативлă ĕçе учета илесси кая юлса пырать. Растрата, çарату пулсан çийĕнчех тупма çук. Вăрă е растратчик тухса тарсан çеç унăн киревсĕр ĕçне пĕлеççĕ. Чылай базăсенче таварсене хисеп тăрăх тата сортласа учета илессине начар йĕркеленĕ. Таварсене базăран е складран тӳрех сутнисене пĕтермен, ун пек фактсене вăхăтра палăртмаççĕ, ку ĕнтĕ законлă йĕркесене хирĕç пыни пулать. Пĕр магазинран тепĕр магазина таварсем куçарассине база урлă туса пыман фактсем халь те пур-ха. Çакăнпа та жуликсем усă кураççĕ. Таварсене реализацилекен аппаратсем хăйсем тĕллĕн ĕçлеççĕ. Сиенлĕ элементсем, паллах, çакăнпа та анлăн усă кураççĕ. Уйрăмăнах палаткăсен, ларексен ĕçне начар контроллеççĕ. Тавар илекенсене, ĕççыннисене улталанисем те сахал мар пулнă.

Материаллă пурлăха учета илессине йĕркелени кирлĕ. Магазинри, база-склад секцийĕсенчи бухгалтери аппаратне, суту-илӳ тата кооперации организацисен инспекторĕсен аппаратне çирĕплетмелле. Ревизи комиссийĕсем хăйсен ĕçне лайăх туса пыма тивĕçлĕ.

Магазин директорĕсен, хăйсен ответлăхне çӳлĕ пусăма лартмалла, вĕсем хăйсен ĕç вăхăтне магазинсенче ытларах ирттермелле, хуралçăсен ĕçне асăрхасах тăмалла. Мĕнпур çуртйĕрсене пăхса тухмалла, вĕсене юсамалла, çирĕплетмелле. Пур çĕрте те тимлĕ те çирĕп хурал тăтăр. Государство пурлăхĕ пĕр пуслăх та ан çухалтăр. Çакăншăн кĕрешес пулать.

Çынсене воспитани парасси — пысăк та кирлĕ ĕç. Ответлă çынсен хăйсен ответлăхне туйса илме вăхăт ĕнтĕ. Ăна халăх пурлăхне шанса панă вĕт, ют пурлăха мар!

Çавăн пекех суд йышăннă решенисем тăрăх растрата укçисене шыраса илесси те начар пулса пырать. Суд исполнителĕсем хăйсен портфельсенче исполнительнăй листсене пиншер тенкĕлĕх йăтса çӳреççĕ, çав вăхăтрах ĕçе пурнăçласси калама çук кая юлса пырать. Вĕсем хăйсене хушнă ĕçе тумаççĕ, тесен те юрать.

Сиенлĕ элементсем хăшпĕр чух хăйсен ĕçĕсене» тума пăрахмасăр куç-кĕрĕнех парăнмаççĕ. Жуликсемпе вăрăсене тата растратчиксене хирĕç хаяррăн кĕрешмелле. Вĕсем пирĕн халăх хуçалăхне пысăк сиен кӳреççĕ. Çакăн пек çынсем пирки аслă М. Горький çапла каланă: «Тăшман парăнмасть пулсан, ăна пĕтереççĕ».

С. АНДРЕЕВ.

Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ.

Вăрманти шкулта

Чугунçулăн икĕ аяккипе пысăк, вĕçĕĕррисĕр вăрман выртать. Разъезд çуĕнчех Çарăклă поселокĕ—çĕнĕрен ӳсен çамрăк поселок. Поселок халĕ пыăках мар-ха, анчах вăл кашни çулах ет. Кунта юлашки çулсенче рабочим валли икĕ хваттерлĕ çуртсем, обежитисем, çĕнĕ клуб, шкул, ачасен сли, магазин, столовăй, медпункт, очта тата вуншар илемлĕ çуртсем ту лартнă. Поселок хыçĕнче автомашиăсен гаражĕсем, мастерскойсем, вăран склачĕсем, хăма çуракан завод, лектростанци.

Хĕлле те, çулла та темиçе çĕршер ын вăрмантан тухма пĕлмеççĕ. Вăрн ĕçĕ—вĕсен юратнă профессийĕ. ăшĕсем кунта вуншар çул каярах илсе, вăрман ĕçне вĕреннĕ, хăйсен ĕлĕвĕсене кулленех ӳстерсе пынă, валификаци туяннă. Халĕ вĕсем масерсем, бракерсем, шоферсем пулса ĕçеççĕ. Кунта вăрман промышленноçĕн айăх кадрĕсем ӳсеççĕ.

Кăçалхи çуркунне вăрман ĕçне вĕенме Çарăклăна çĕнĕ çынсем—колхоз амрăкĕсем килчĕç. Партипе правительтво ĕç резервисем хатĕрлесси çинчен ышăннă постановленине пĕтĕм чĕреен ырласа, вĕсем çĕнĕ ФЗО шкулĕн пысăк хавасланăхпа вĕренме тытăнĕç. Колхозсем çĕнĕ шкула чи лайăх, аттур, ĕçе юрататкан çамрăксене янă. Вăрман ĕçĕнче нумай çулсем хушши ленĕ, пысăк опытлă çынсем çамрăкне çĕнĕ ĕçе вĕрентеççĕ. Вăрнарти Труд» артелĕн председателĕ пулнă ехник Владимир Яковлевич Игнатьев лташ—ФЗО шкулĕн директорĕ. ВКП(б) ăрнар райкомĕн пропагандисчĕ пулнă озонов юлташ—директорăн политика ĕне ĕçлекен заместителĕ. Старший астер Петров, мастерсем Яковлев, ндреев, Сычев пурте Вăрнарти вăрманпромхозра ĕçленĕ, вăрман ĕçне лайăх пĕлеççĕ.

Мастер помощникĕ Сергей Андреев юлташăн пĕтĕм пурнăçĕ вăрман ĕçĕпе çыхăнса тăрать. Вуникĕ çул каярах вăл вăрманта сезонник пулса ĕçленĕ, унтан кадровăй рабочи, бригадир пулнă. Унăн бригади вăрманта чи малтан стахановла ĕçлеме пуçланă. Çак бригадăри çынсенчен нумайĕшĕ халĕ шоферсем, трактористсен профессийĕсене туяннă. Сергей Андреев юлташ темиçе çул хушши бракер пулса ĕçленĕ. Халĕ вăл лесорубсен группинче мастер помощникĕ, çамрăксен юратнă аслă юлташĕ тата руководителĕ.

Çамрăксем валли чи лайăх общежитисем хатĕрленĕ. Кунта таса, илемлĕ, кашниннех лайăх койка, çемçе вырăн. Пӳлĕмсенче плакатсем, лозунгсем, çулпуçсен сăнĕсем. Чӳречесем çинче илемлĕ, шап-шурă шторăсем, вĕсене поселокра пурăнакан хĕрарăмсем, ачасен яслинче ĕçлекен комсомолкăсем хатĕрленĕ. Кунта радио, купăс, балалайкăсем пур. Çĕнĕ тумтирсем тăхăннă çамрăксем йĕритаврари йĕркелĕхе, тасалăха, илемлĕхе часах вĕренсе çитнĕ, хăйсем те татах та илемлĕрех çӳреме пуçланă.

Мастерсем çамрăксене вăрман касас, турттарас, ăна сортлас ĕç çинчен вĕрентме пуçланă. Ку çамрăксемшĕн çĕнĕ ĕç, унпа интересленеççĕ, тăрăшса вĕренеççĕ. Вĕсем вăрманти рабочисен ĕçне курнă, рабочисемпе паллашнă. Паллă стахановецсен ĕçĕсем вĕсене тĕлĕнтернĕ, çĕнĕ профессине лайăхрах вĕренме хавхалантарнă.

Çарăклăри стахановец Иван Степанович Зеленцов вăрманта 22 çул ĕçлет. Вăл темĕн тĕрлĕ материал, темиçе тĕслĕ ассортиментлă продукцисем тума та вĕренсе çитнĕ. Ĕç укçийĕ те унăн уйăхне виçĕ пин тенкĕ çитет. Унпа пĕрле тăванĕсем—Михаил, Дмитрий, Аркадий Зеленцовсем ĕçлеççĕ. Вĕсем те вăрман мастерĕсем, уйăхне икшер пин тенкĕ ĕçлесе илеççĕ. Иван Степанович Зеленцовăн ывăлĕ—Сергей 17 çулта çеç, анчах вăл вăрман ĕçне лайăх вĕреннĕ, уйăхне 500 тенкĕ ĕçлесе илет.

Çамрăк лесорубсем, возчиксем хăйсен групписемпе ĕçе тухнă. Илемлĕ вăрманта. Ĕçлеме те савăнăçлă совет вăрманĕнче. Кун пек пулман ĕлĕк çак вăрмантах, çак кварталсенчех. Кунта хуçа-улпутсем — Александровсем, Антоновсем пулнă, вĕсем патне çĕршер çухрăмран пиншер хресченсем ĕç ыйтма килнĕ. Шалашсенче, землянкăсенче пурăннă рабочисем. Ун çинчен кунта кашни ялтах тăрăхса каласа параççĕ. Сендимиркинăри ватă колхозник Кузьма Игнатьевич Чернышов вăрманта 40 çул ĕçлет. Анчах ĕлĕк вăл кунта нумай асап, мăшкăл тӳснĕ.

— Халĕ çамрăксене ĕçлеме вĕрентеççĕ, лайăх çитерсе, тумлантарса усраççĕ. Çĕнĕ, телейлĕ çамрăксем ӳсеççĕ,— тет вăл час-часах савăнса

Ирхине вăрманта хĕрӳллĕ ĕç пуçланать. Вĕренекенсем хăйсен бригадисемпе делянкăсене тухаççĕ, инструментсене тĕрĕслеççĕ те ĕçе тытăнаççĕ. Делянкăра вăрман шавласа çеç ларать. Патвар та çирĕп сывлăхлă çамрăк рабочисем йывăççене хăюллăн ӳкереççĕ, касаççĕ, паха продукцисем тăваççĕ. Эрне ытла ĕнтĕ вĕсем ĕç нормисене тултарма пуçларĕç. Вăрнар районĕнчи Хапăс колхозĕнчен килнĕ çамрăк колхозник, комсомолец Иван Никифоров, Мамалайри колхозник-комсомолец Дмитрий Гончаров ĕç нормисене чи малтан тултарма пуçларĕç. Вĕсем хыççăн Борис Порфирьев, Иван Романов, Сидор Матвеев ăнăçлăн ĕçлесе пыма тытăнчĕç. Çакă вăл пĕтĕм шкулшăн пысăк çитĕнӳ те, савăнăç та пулнă.

Уйрăмăнах пĕрремĕш бригада çинчен мăнкăмăллăн каласа параççĕ. Çамрăк бригадир, комсомолец Иван Никифоров ачасене юратать. Вăл хăй те лайăх ĕçлет, ачасене те лайăх ĕçлеме вĕрентет. Часах Иван Никифоров хăма вартама пуçлать. Йывăр ĕç вăл, ăна тума темиçе çул хушши вĕренмелле. Анчах кунта йĕритаврах юман, вĕрене, хурăн, çавăнпа та хăма тума пĕлни питех те кирлĕ. Мастер помощникĕ Сергей Андреев вĕсене хăма çурма нумай вĕрентнĕ, хăй ĕçлесе кăтартнă, каласа панă.

Нумай пулмасть группăри ачасен пĕлĕвĕсене опытлă инженерсем, техниксем тĕрĕсленĕ. Вĕсем делянкăрах, вĕренекенсем йывăççем хатĕрленĕ çĕртех, вĕсен теориллĕ тата практикăллă пĕлĕвĕсене тĕрĕсленĕ. Кунта та пĕрремĕш бригада мала тухнă, пурте вĕсем отлично ответленĕ. Бригадăра 5 комсомолец, вĕсем ĕçре примерлă, дисциплинăллă.

Иккĕмĕш бригадăра та тĕлĕнмелле лайăх, ĕçе тĕплĕ тăвакан çамрăксем. Бригадир комсомолец Дмитрий Гончаров ĕçе лайăх организациленĕ, çамрăксем вăрман ĕçне вĕренсе çитеççĕ. Комсомолец Павел Егоров кунта киличчен те вăрманта ĕçленĕ. ФЗО шкулĕ уçăлсанах вăл вĕренме яма ыйтнă. Халĕ шкулта примерлă ученик. Вăл бригадирпа пĕрле юлташĕсене ĕçлеме вĕрентет. Иван Великанов, Иван Степанов, Петр Чернышев—ĕçлеме вĕренсе çитнĕ, халĕ вĕсем те нормăсене тултарса пыма пуçларĕç.

Лесорубсен группинче начартарах ĕçлекенсем те пур-ха. Селивестр Щукин, Иван Архипов, Николай Семенов, Петр Морозов халĕ те ĕç нормисене тултараймаççĕ, ĕçе лайăх тума тăрăшмаççĕ. Вĕсем çинчен группăра, бригадăсенче сӳтсе-яваççĕ, вĕсене ĕçре пулăшаççĕ, анчах çапах та хушăран вĕсем кахалланма тăраççĕ. Мастерсем вĕсемпе халĕ уйрăммăн ĕçлеççĕ. Возчиксен группинче мастер пулса комсомолец Сычев ĕçлет. Çамрăксене лайăх вĕрентет. Возчиксем трелевкăра та, турттарас, тиес, пушатас çĕрте те ĕçлеме вĕренсе çитнĕ. Çамрăк колхозник Александр Васильев шкулта возчиксен бригадирĕ, унăн бригадинче нормăна тултарайман пĕр вĕренекен те çук. Хăй вăл опытлă возчиксем пекех ĕçлет, унăн ĕçĕнчен пурте тĕлĕнеççĕ. Бригадăра Александр Амурин, Петр Николаев, Александр Тимофеев нормăсене ытлашшипех тултарса пыраççĕ, вĕсем кунне 10 тенкĕ таран ĕçлесе илеççĕ.

Илья Сергеев бригади те ĕç нормисене тултарма пуçланă. Кунта кая юлакансене çийĕнчех пулăшаççĕ, вĕрентеççĕ. Александр Быков начартарах ĕçленĕ, дисциплина та унăн çирĕп пулман. Бригадăра ун çинчен сӳтсе-явнă, кăтартса панă, ĕçре пулăшсах пынă. Халĕ вăл лайăхах ĕçлет, вĕренĕве ăнăçлăн вĕçлеме ĕмĕтленет.

Сталинла ĕç резервисем ӳсеççĕ, лайăх специалистсем пулаççĕ.

Çарăклă вăрманпункт начальникĕ, инженер Кирилл Кондратьевич Боярский шкул директорне çапла калать:

— Сирĕн ачасем ĕçленине куркалатăп та, вĕсен ĕçĕ мана кăмăла каять. Кĕркунне валли пире эсир виç-тăват бракер уйăрса памăр-и?

Шкул директорĕ Владимир Игнатьев çакăн пек хак панăшăн хĕпĕртет те, мăнкăмăлланать те.

Вăрманта ĕç пĕтсен вĕренекенсем вăхăта культурăллă ирттереççĕ. Анчах кунта çитменлĕхсем те пур-ха. Шкул уçăлнăранпа икĕ уйăх çитнĕ, анчах вĕренекенсене пĕр хутчен çеç кино кăтартнă.

Военрук Иванов çапла физкультура ĕçне аван йĕркеленĕ. Халĕ вĕренекенсем 3—4 оборона значокĕсем илеççĕ, профсоюзпа комсомол кросне хутшăнаççĕ. Малтанхи тренировкăра иккĕмĕш бригада (бригадирĕ Дмитрий Гончаров юлташ) мала тухнă. Июнĕн 15-мĕшĕнче пĕтĕм шкул кросса тухрĕ.

Е. ЕНИ.

Калча çинче выльăх çӳрет

ОКТЯБРЬСКОЕ. Пĕрмай çумăр çуса тăнă май, çуртри калчисем карах шăтса тухрĕç. Калчасен тăршшĕ çирĕм сантиметра çитет. Агротехника кăтартăвĕсене ăнăçлăн пурнăçласа пырсан, çуртри тухăçĕ вăйлă пуласси курăнсах тăрать. Анчах районри хăшпĕр колхозсем калчасене халех выльăхсене ваттарма тытăнчĕç.

Шĕнерпуçĕнчи Маяковский ячĕпе тăракан колхоз калчи çинче яланах выльăхсем курма пулать. Конюхсем ĕçе кайман лашасене, тихасене уя кăларса яраççĕ те, хăйсем килти ĕçе ĕçлеççĕ. Унăнче картине юсаманнине пула, кĕтӳ кĕртсен, выльăхсем уя тухса, калча çинче çӳреççĕ. Унăнче картине юсас пирки колхоз правленийĕ шухăшламасть те.

«Коммунизм» колхозра та выльăхсем калчасене ватаççĕ. Кунти хăшпĕр колхозниксем (А. Алексеева, П. Ефремов) сурăхсене ир-ирех, кĕтӳ кайиччен, кăларса яраççĕ, кайран вĕсем калча çине тухса каяççĕ.

Кармалти «Звезда», Кив Акчурари «Ленин çулĕпе», Аслă Кăрăккари «Вулкан» колхозсенче те çавăн пекех, калча çинче ĕнесем, сурăхсем çӳреççĕ.

П. КОЗЛОВСКИЙ.

Тырпулсене пухса кĕме халех хатĕрленер

☆ ★ ☆

Чăваш АССР колхозсенче июнĕн 15-мĕш тĕлне çураки ĕçĕсем мĕнле пынине кăтартакан сводка

(Процентпа)

Районсем	Çурхи тырăсене пĕтĕмпе акнă	ВĂЛ ШУТРАН Çĕрулми	Пахча-çимĕçсем	Йĕтĕн-кантăр, махорка	Тымар-çимĕçсем, силос культурисем
Улатăр	91,6	50	46,1	54,8	70,9
Элĕк	100	94,9	90,0	98,7	68,3
Вăрнар	96,9	95,1	73,3	44,7	103,6
Йĕпреç	100,4	85,6	62,2	57,8	81,0
Ишлей	97,3	94,5	74,3	89,0	58,3
Калинински	98,6	93,8	79,1	65,9	145,1
Канаш	101	91,6	76,5	101,7	87,6
Куславкка	100,3	98,7	25,3	план çук	82,5
Комсомольски	102,6	92,7	77,6	99,2	100
Красноармейски	100,9	95,2	81,2	55,4	86,0
Хĕрлĕ Чутай	102,5	99,8	88,8	93,0	86,2
Кувакино	95,3	76,4	57,1	67,4	96,7
Сĕнтĕрвăрри	99,8	92,5	44,1	план çук	42,0
Октябрьски	101,7	98,1	96,2	76,0	72,1
Первомайски	102,2	119	60,0	107	100,6
Пăрачкав	97,8	98,7	88,8	76,7	74,0
Советски	100,3	98,0	41,3	89,8	63,4
Сĕнтĕр	103,7	98,6	27,6	92,7	59,3
Вăрмар	104,3	95,6	66,0	100	110
Çĕрпÿ	99,0	104,7	47,2	67,1	83,5
Шупашкар	95,9	93,6	30,5	101,1	77,1
Чкаловски	104,3	85,8	97,5	100	111,4
Шăмăршă	96,8	60,0	38,1	64,0	56,4
Шăхасан	100	89,1	103,8	81,6	92,6
Çĕмĕрле	100,7	93,2	30,0	92,3	62,5
Етĕрне	98,8	90,4	31,0	81,4	63,5
Елчĕк	99,9	91,8	106,6	98,8	89,6
Тăвай	100,1	98,0	96,1	86,7	99,0
Шупашкар хули	100,3	101,6	73,3	план çук	120
Республикипе	99,9	93,7	63,2	78,7	80,9

Çумкурăксене тата хурт-кăпшанкăсене хирĕç кĕрешесси

КАНАШ. Тырпулсен тата пахча-çимĕç культурисен тухăçне ÿстерме чăрмантаракансенчен пĕри вăл—çумкурăксемпе вăхăтра кĕрешменни пулса тăрать. Çумкурăксен хÿттипе ялхуçалăхне сиен кÿрекен хурт-хăпшанкăсем ĕрчеççĕ. Иртнĕ çул Асхвари «Красное пламя» колхозра хăяра, вăхăтра çумламан пирки, пĕтĕмпех пĕтерсе лартнă пулнă. Çĕнĕ Шелттемри «Красная звезда» колхозра çурхи тулăна çумламан пирки 20 гектартан 60 центнер тухăç çухатнă. Сиккассинчи Шмидт ячĕпе тăракан колхозра тата Кармамири Чапаев ячĕпе тăракан колхозра хурт-хăпшанкăсем купăстана çисе янă. Юндабари «Канаш», Елмачри «1-ое Мая» колхозсем ирхи çĕртме тунă хыççăн çĕртме пуссине нимĕн те сăпаса тăман, çавăнпа унта тĕрлĕ çумкурăксем ĕрченĕ. Вăл колхозсен çав вырăнта акнă ыраш калчисем кăçал начартарах.

1941 çулта кашни колхоз председателĕн, уй-хир тата пахча-çимĕç бригадирĕн, колхозниксен ĕмĕчĕ—ялхуçалăх культурисен тухăçне ÿстересси. Партипе правительство колхозниксене тухăçлă ĕçлеме лайăх условисем туса парĕç. Çуракинче акакансем, сухалакансем тата сÿре сÿрелекенсем нумайĕшĕ ĕç нормине тултарса ĕçлерĕç.

Анчах хăшпĕр колхоз председателĕсем халĕ çуракинчи çитĕнÿсемпе лăпланса ларăççĕ, çум çумлас ĕçе организацилесси çинчен шутламаççĕ.

Çĕнĕ Ачча колхозĕн 18 гектар вăрлăхлăх акнă клевер тата 14 гектар çуртри акнă участоксенче çумкурăксем тапса тухнă. Чиркÿллĕ Аччара «Красная Армия» колхозăн кĕрхи тулă çинче антра çарăк курăкĕ нумай ĕрчет. Çавăн пекех Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхозăн клеверĕ çинче те çумкурăксем нумай шăтнă. Асăннă колхозсен руководителĕсем çумкурăксене тасатма тăрăшмаççĕ.

Çанталăк ăшăтнă май çумкурăксем хăвăрт ÿсеççĕ. Вĕсемпе пĕрлех хурт-кăпшанкăсем те сахал мар ĕрчеççĕ. Çумкурăксене çуллĕ ÿсме памалла мар, вĕсене çумласах тăрас пулать. Çум çумлассине калчасем çинче çеç мар, пахча-çимĕç, сад вырăнĕсенче те туса пымалла.

Хăшпĕр çĕрте çĕр пăрçисем (земляная блошка) тĕл пулкалаççĕ. Вĕсем тин шăтса тухнă антра çарăк çулçисемпе тăранса пурăнаççĕ. Кайрантарах вĕсем çамрăк купăста çулçисем çине куçса, вĕсене сиен кÿме тытăнаççĕ. Çавăн пекех вĕсем турнепс, çарăк калчисене те сиенлеме пултараççĕ. Çĕр пăрçисен йăви—çумкурăксем. Çавăнпа та вĕсене хăвăртрах пĕтерсе пырас пулать. Уяр çанталăкра купăста, турнепс, брюква лартнă вырăнсене кремне-фтористăй натрипе тусанламалла.

Купăста шăнипе сухан шăнисем те кĕçех сиксе тухма пултараççĕ. Вĕсем купăста тата сухан лартнă вырăнсенче çăмарта хума пуçлаççĕ. Çавна пĕтерме çакăн пек май пур: купăстапа сухан тымарĕсем тĕлне нафталина аланă çĕрпе хутшăнтарса сапса тухас пулать.

Кунсăр пуçне купăстана ытти хурт-кăпшанкăсем те сиен кÿреççĕ.

Вĕсемпе кĕрешме хатĕрленсех тăмалла. Купăста пуçĕ чăмăртаннă вăхăталла парижская зеленьпе хатĕрленĕ растворпа сапса сÿремелле. Вăл растворра çакăн пек тăваççĕ: 10 литр шыв çине 12—15 грамм парижская зелень, 25—30 грамм сÿнтернĕ известь, пĕр стакан хăймасăр сĕт ярса хутшăнтараççĕ.

Çапла вара, çумкурăксене пĕтернипе пĕрлех хурт-кăпшанкăсемпе кĕрешме кирлине те манма юрамасть.

Агроном С. ГРИГОРЬЕВ.

☆

Комбайнсене вăхăтра юсамалла

ÇЕМЕРЛЕ. Машинно-тракторнăй станци комбайнсене юсама çуракине тухиччен тытăннă. Комбайнер-отличник Чекменев тата комбайнер Медведев юлташсем хăйсен комбайнĕсене пысăк пахалăхпа юсаса пĕтерчĕç.

МТС слесарĕ Назарчук юлташ комбайнсене юсама запаслă пайсене—колебательнăй валсене, соломотранспортерсене мастерскойĕнчех туса хатĕрлерĕ. Ытти запаслă пайсене—Эвартпа Галь сăнчăрĕсене, транспортер планкисене, çĕçĕ шатунĕсене т. ыт. те МТС тахçанах илсе хатĕрленĕ.

Комбайнсене вăхăтра юсаса пĕтерме МТ Станцин условисем çителĕклĕ. Апла пулсан та паянхи куна МТС 9 комбайнран 4 комбайн çеç юсаса пĕтернĕ.

Комбайнсене юсасси — валсем çитмен пирки тăсăлса пынă. Валсене тÿрлетме Канашри машинно-тракторнăй мастерскойне леçсе панă. Валсене унта тахçанах тÿрлетсе хатĕрленĕ. Анчах та МТС дирекцийĕ ку тарана çитсе те кайса илмен. Тепĕр комбайнне юсасси комбайнер çук пирки тăсăлса пынă. Комбайнерĕ пур. Анчах та, комбайнсене хĕрсе юсас вăхăтра, Мăн-Улхашри «Красноармеец» колхозра кăк кăларнă çĕрте тытса тăнă. Тепĕр комбайнне пысăк полотно тата приемнăй транспортер çук пирки вăхăтра юсаман. Çапла вара комбайнсене июнĕн 1-мĕш тĕлне юсаса пĕтерме май пур çĕртех паянхи куна çитсе те юсаймарĕç.

МТ Станцин 9 молотилка юсамалла. Молотилкăсене юсама ку тарана çитсе те тытăнман-ха. Ятарласа организациленĕ бригада халĕ те запаслă пайсене хатĕрлет.

МТС дирекцийĕн машинăсене юсас ĕçе хăвăртлатмалла.

Гр. ПЕТРОВ.

Тырпула лайăх пухса кĕме хатĕрленни кирлĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Шурçырма ялсоветне кĕрекен «Искра» колхоз çураки ĕçне вĕçленĕренпе чылай вăхăт иртрĕ.

Чылай колхозсем районра çĕртме тăваççĕ, уя тислĕк кăлараççĕ, уборкăра кирлĕ ĕçхатĕрĕсемпе машинăсене юсаççĕ. Анчах та «Искра» колхоз (председателĕ Федоров юлташ) уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçе тытăнман. Колхозăн икĕ молотилка, 1 жнейка, веялка тата урапасемпе ут таврашсем чылай юсамалла. Анчах вĕсене тума пĕгне те тытăнман-ха. Колхозра миçе урапа юсамаллине те пĕлмеççĕ, мĕншĕн тесен, урапасемпе ут таврашсене пĕтĕмпех колхозниксене салатса панă. Кирек мĕнле ĕç тăвас пулсан та, бригадирсем килĕрен çÿресе урапа шыраççĕ. Колхозăн ĕç хатĕрĕсене учета тĕрĕс илмелле, вĕсемпе йĕркеллĕ усă курма пĕлмелле. Уборкăна хатĕрленес ĕçе — «халĕ вăхăт пур-ха» — тесе кĕтсе тămалла мар. Колхозри тимĕрçĕ лаççине кашни кун ĕçлеттермелле, юсамалли машинăсемпе ĕçхатĕрĕсене хăвăртрах юсамалла.

А. КИСЕЛЕВ.

Çĕртме тума васкамаççĕ

ЙЕПРЕÇ. Шăртан ялсоветне кĕрекен «Заря» колхоз çĕртме тăвас, çĕрулми лартас ĕçсене вăраха тăсать. Колхозăн çĕрулми 21 гектар лартмалла. Анчах та çĕрулми вăрлăхĕ çитмест.

Çавăн пекех кунта çĕртме тăвас ĕç те начар пырать. Колхоз правленийĕ МТС çине шанса тăнă. Паянхи куна 80 гектар ытла сухаламалла пулнă пулсан, çуррине кăна сухаланă. Çав вăхăтрах колхозăн лашисем ирĕкре çÿреççĕ.

Ф. КИРИЛЛОВ.

☆ ★ ☆

Чăрмантаракан сăлтавсем

Çураки вăхăтĕнче хăшпĕр колхозсемпе МТС-сем «çумăр çăвать» тесе ĕçе тăсса пычĕç. Халĕ те, çĕртме сухи тăвас ĕçре те, кая юлса пыракан колхозсемпе МТ Станцисем çук мар-ха, сăмахран, Етĕрне, Куславкка т. ыт. МТ Станцисем юлса пыраççĕ.

Г. Харлампьев ÿкерчĕкĕсем.

— Ĕçлеме май çук, татти-сыпписĕр çумăр çăвать...

— Ĕçлеме май çук, ытлашши шăрăх тăрать...

Ялхуçалăх выставки участникĕсен шучĕ ÿссех пырать

ЙЕПРЕÇ. Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинчи чаплă çитĕнÿсемпе туллин усă курса ĕçленипе, вăл опытсене колхозсенче анлăн сарса пынипе выставка участникĕсен шучĕ пирĕн районри колхозсенче те чылай ÿсрĕ. 1939 çулта выставка участникĕсем 9 çын кăна пулнă пулсан, кăçал вĕсен шучĕ 49 çынна çитрĕ. Кунсăр пуçне «Большевик», «Правда», «Трактор на Хоме», Крупская ячĕпе тăракан колхозсем тата машинно-тракторнăй станци 1941 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма тивĕç илчĕç.

Çак асăннă колхозсем социализмлă ялхуçалăхĕнче çултан-çул чаплă çитĕнÿсем тăваççĕ. «Большевик» колхоз кăçалхипе иккĕмĕш çул ĕнтĕ выставка участникĕ. Кăçал вăл обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, унăн продуктивлăхне ÿстерес ĕçре пысăк çитĕнÿ турĕ. Ку колхозăн пурĕ 4 ферма. Вĕсенчен ĕне ферми уйрăмăнах палăрса тăрать. 1940 çулта ĕне ферминче майракаллă шултра выльăхсем 80 пуç пулмалла пулнă, вĕсем 86 пуçа çитернĕ, çамрăк пăрусене пурне те тĕрĕс пăхса çитĕнтернĕ. Кашни фуражлă ĕнерен 1435-шер литр сĕт суса илнĕ. Ĕне ферми кăçал та аван ĕçлет. Государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1941 çулти планĕ тăрăх ĕне ферминче майракаллă шултра выльăхсем 80 пуç пулмалла пулсан, паянхи куна 90 пуç шутланать. Дояркăсем кăçал кашни фуражлă ĕнерен 1800-шер литр сĕт суса илессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Дояркăсем хăйсем пăхакан ĕнесенчен сĕт ытларах суса илме пуçларĕç. А. Пименова доярка февраль уйăхĕнче «Вера» ятлă ĕнерен 257 литр сĕт суса илнĕ пулсан, март уйăхĕнче 319 литр суса илнĕ.

Хурамалти «Красный водник» колхозри махорка лартса тăвассипе ĕçлекен бригадăн бригадирĕ Максим Макаров, иртнĕ çулта пысăк тухăçлă махорка туса илнипе, 1941 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма тивĕç илчĕ. Унăн çитĕнĕвĕсем пысăк. Иртнĕ çулта 17 гектар çинчен кашни гектартан 22-шер центнер махорка туса илнĕ. Государствăна 47 пин тенкĕлĕх махорка панă, планран ирттерсе панăшăн 17 пин тенкĕ премин-надбавка илнĕ, вăл шутран махорка патĕнче ĕçлекенсене 8.500 тенкĕ валеçсе панă.

М. Макаров бригади кăçал та пысăк тухăçлă махорка туса илессишĕн кĕрешет. Районсен социализмлă ăмăрту договорĕнче гектартан 25 центнер махорка туса илме пăхнă пулсан, М. Макаров бригади 30 центнер туса илме обязательство панă. Кашни звенона уйрăм участоксем çирĕплетсе панă. Çурхи ĕçсем пуçланас умĕн махорка лартса тăвакан участок çумĕнчи «Емĕт» çырмине пĕвеленĕ. Çак çырмари шывпа махорка калчисене шăвараççĕ. Кунсăр пуçне çĕре çемçетме 78 центнер кĕл, 63 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ, 55 центнер фосфорит çăнăхĕ кÿрсе килнĕ, 1200 лав тислĕк кăларнă, çавăн пекех тата 1000 лав торф кăларма пăхнă. Майăн 5-мĕшĕнче 1500 тăваткăл метрлă лаптăк çине махорка акса хăварнă, 7 гектар çине сеялкăпа акнă.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансем кăçалхи çуракинче çĕнĕрен вуншар çын хутшăнчĕç. «Молния» колхоз çуракине 5 кун, «Трактор на Хоме» колхоз 6 кун, «Коминтерн» колхоз 6 кун хушшинче, пысăк пахалăхпа вĕçлерĕç. Машинно-тракторнăй станци тракторсемпе ĕçлемелли çурхи ĕçсен планне июнĕн 5-мĕшне 102,48 процент тултарчĕ.

Тракторсемпе ĕçлемелли çурхи ĕçсен планне тултарассипе кăçал 7-мĕш бригада малти вырăна йышăнчĕ. Çак бригада плана 138,6 процент тултарчĕ. Уйрăмăнах кăçал çĕнĕрен организациленĕ 12-мĕш бригада (бригадирĕ И. Герасимов) аван ĕçленине палăртмалла. Çак бригада кăçал, пĕррмĕш çул пуçласа ĕçлет пулсан та, çурхи ĕçсен планне 115,2 процент тултарма пултарчĕ.

1941 çулти ялхуçалăх çулĕнче выставка участникĕсен шучĕ татах та ÿсессине шанма пулать.

Дм. МИХАЙЛОВ.

Колхозсен урапасем çителĕксĕр

СЕНТЕР. Ирçери Сталин ячĕпе тăракан колхозăн урапа таврашсем çителĕксĕр. Бригадăсенче юрăхлă урапасем 6—7 кăна. Колхоз председателĕ ку ĕçпе интересленмест.

Лаша кÿлмелли таврашсем те йĕркеллĕ мар. Кун пирки темиçе хутчен те асăрхаттарнă. Анчах вăл решенисем хут çинче çеç тăрса юлаççĕ.

АРХИПОВ.

Çĕнĕ закона тĕрĕс пурнăçлассишĕн

Выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕн тата тырпул тухăçĕн производствăллă заданийĕсене Сĕнтĕр районĕнчи мĕнпур колхозниксемпе фермăсенче ĕçлекенсем патне çитернĕ. Колхозниксенчен нумайĕшĕ кăçалхи çул вĕсем мĕнле результатсем тумаллине тата план-заданине ирттерсе тултарнăшăн натурăпа мĕн чухлĕ илме пултарнине пĕлеççĕ. Ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен йышăннă постановлени тухнă хыççăн фермăсенче пысăк улшăнусем пулса пыраççĕ. Пуçарулăх пысăкланчĕ, колхозниксем выльăх-чĕрлĕхшĕн ытларах тăрăшма, специалистсенчен ытларах канашсем ыйтма пуçларĕç тата ыт. те. Çакна нумай фактсемпе кăтартма пулать.

Оринино ялсоветĕнчи «Красное Сормово» колхозра иртнĕ çулта пĕррмĕш кварталта 22 ĕнерен 2570 литр сĕт суса илнĕ пулсан, кăçалхи пĕррмĕш кварталта çав ĕнесенченех 5580 литр сĕт сунă. Кашни фуражнăй ĕне пĕлтĕр талăкра 3,2 литр сĕт панă пулсан, кăçал вара кашни ĕнерен талăкне 5,3 литр сĕт сăваççĕ.

Кашмаш ялсоветĕнчи «Свобода» колхозри дояркăсем Г. Сурикова тата Р. Григорьева кашни фуражнăй ĕнерен 1200 литр сĕт суса илме обязательство илнĕ, ăна вĕсем чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Çĕнĕ çултан пуçласа майăн 15-мĕшĕччен «Матренка» ятлă ĕнерен 510 литр сĕт сунă. Р. Григорьева доярка çав вăхăт хушшинче «Кудаш» ĕнерен 532 литр сĕт сунă. «Красная Чувашия» колхозри доярка Максимова, планпа пăхнă заданине ирттерсе тултарнăшăн, авансла 48 литр сĕт илнĕ те ĕнтĕ. «Çĕнĕ Юнга» колхозри доярка Маряшкина хăй çумне çирĕплетнĕ ĕнесенчен май уйăхĕнче план тăрăх 1324 литр сĕт сăвас вырăнне 1675 литр сунă. Доярка Тайгильдина май уйăхĕнче 1012 литр сĕт сунă, план тăрăх унăн 906 литр сумалла пулнă.

«Новый путь» колхозри дояркăна Вашурова юлташа, сĕт сăвас плана ирттерсе тултарнăшăн, колхоз правленийĕ авансла 82 литр сĕт панă. Çавăн пекех «Çĕнĕ Юнга» колхозри доярка Каптурина та, сĕт сăвас плана ирттерсе тултарнăшăн, авансла 75 литр сĕт илнĕ.

Тутаркас ялсоветĕнчи «Красный Октябрь» колхозра фермăсенчи выльăхсене пăхса усрас ĕçе лайăх организациленĕ. Кунта кашни доярка хăй çумне çирĕплетнĕ ĕнесене тимлĕн пăхать. Ку колхозра пĕлтĕр 5 уйăх хушшинче 307 литр сĕт суса илнĕ пулсан, кăçал вара çав уйăхсем хушшинче 549 литр сĕт сунă.

«Новый путь» колхозри телятница Е. Комиссарова юлташ пăрусене пăхса ÿстерес тĕлĕшпе питĕ тăрăшса ĕçлет. Комиссарова юлташ телятница пулса 7 çул ĕçлет, çичĕ çул хушшинче вăл 247 пăру ÿстернĕ. Халĕ вăл 25 пăру пăхать. Вăл пăхакан пăрусем вăтам шутпа кашни талăкрах 600—700 грамм хушăнаççĕ. Çав вăхăтрах хăшпĕр пăрусем — «Вторая», «Невестка» тата ыт. те кашни кунах 1033 грамм таринччен хушăнаççĕ. Комиссарова юлташ — Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участници.

Дояркăсемпе телятницăсенчен свинарсем те юлмаççĕ. «Красное Сормово» колхозри свинаркăсем З. Порфирьева тата А. Кузьмина юлташсем план тăрăх кашни ама сыснаран 11 çăвăр илмелле пулсан 11,1 çăвăр илнĕ, хăшпĕр амасенчен 14-шар çăвăр илнĕ. Икĕ уйăхри çăвăрăн чĕрĕ виçи 14—15 килограмма çитет. «Свобода» колхозри свинарь Семенов юлташ 6 амаран 73 çăвăр илнĕ, вĕсене пурне те сыхласа хăварнă.

Колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен постановлени кăларнă хыççăнхи малтанхи çитĕнÿсем çакăн пек ĕнтĕ. Ĕçшĕн тÿлемелли çĕнĕ йĕркене пурнăçлассинче çитменлĕхсем пулман пулсан, çитĕнÿсем татах та ытларах пулмаллаччĕ. Хăшпĕр колхозсенчи руководительсем çак питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ мероприятине пурнăçа кĕртесси çине çиелтен пăхнă. Тĕштырă культурисен тухăçлăхĕн тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕн планлă заданийĕсене хăшпĕр колхозсенче ячĕпĕн çеç туса тухнă.

«Çĕнĕ Юнга» тата «Майăн 1-мĕш» колхозсенче звеносем çумне 7—8 культура çирĕплетнĕ. Çав вăхăтрах СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) постановленийĕнче: колхозсенче хальхи вăхăтра ĕçлекен звеносене çаплах хăварма сĕнес; вĕсем çумне, çавăн пекех çĕнĕрен тăвакан звеносем çумне те, правило пекех, 2—3 культурăран ытла мар çирĕплетсе памалла тата звеносем çумне тĕштырă культурисем те çирĕплетсе паракан колхозсенче 3—5 культурăран ытла мар çирĕплетсе памалла, тенĕ. Хăшпĕр колхозсенче çак кăтартăва пăсни те пулнă.

Çавăн пекех районра выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илес тĕлĕшри плана тĕрĕс мар тунисем те пур. «Красное Сормово» колхозра государство заданийĕ тăрăх пĕр фуражнăй ĕнерен 1100 литр сĕт суса илмелле чухне, производствăллă план çинче 1120 литр сумалла тесе çырнă. «Майăн 1-мĕш» колхозра та ку тĕлĕшпе çитменлĕхсем пулнă: государство заданийĕ тăрăх пĕр ĕнерен 1000 литр сĕт сăвас вырăнне, производствăллă план çинче 1350 литр сумалла тесе çырнă. «Заря» колхозра пĕр фуражнăй ĕнерен сĕт сумалли государство заданине 1050 литр вырăнне 1305 литра çитернĕ.

Планпа панă заданисене ирттерсе тултарнăшăн колхозниксене натурăпа аванс парассине те пăснă фактсем пур. «Çĕнĕ Юнга» тата «Свобода» колхозсен правленийĕсем авансла сысна çурисене пама йышăннă пулнă. Ку вăл постановленине пысăккăн пăсни пулать.

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1941 çулти мартăн 13-мĕшĕнче йышăннă постановленине пурнăçа тĕрĕс кĕртес ĕçре колхозсенче учет ĕçне лайăх туса пыни кирлĕ. Анчах Сĕнтĕр районĕнчи нумай колхозсенче учет çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхни çук-ха: продукцине тата ĕçкунĕсене учета илесси чылай колхозсенче начар тăрать-ха. Шăшкар ялсоветĕнчи «Аврора» колхозра (колхоз председателĕ Перцов юлташ) продукцине учета пачах илмеççĕ, государство планне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксем патне çитермен. «Майăн 1-мĕш» колхозра кашни уйрăм ĕнерен суса илнĕ сĕте учета илмеççĕ. Колхозсенчен нумайĕшĕсенче выльăхсене виçессине те халиччен йĕркелемен-ха. Çавна пула, çамрăк выльăхсене виçсе, вĕсен чĕрĕ виçи мĕнле хушăнса пынине пĕлме те май çук. Выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстерессинче выльăхсене, уйрăмăнах çамрăк выльăхсене епле пăхса усрани пысăк вырăн йышăнать. Анчах та Сĕнтĕр районĕнчи хăшпĕр колхозсенче выльăхсене начар пăхаççĕ. «Майăн 1-мĕш», «Заря», Войков ячĕпе тăракан колхозсенче выльăхсене питĕ начар пăхса усраççĕ: тислĕке вăхăтра кăлармаççĕ, витесенче тасалăх та çук. Çакăн пек йĕркесĕрлĕхе пула колхозсенче кăçал çуралнă выльăхсем вилнĕ фактсем те сахал мар пулнă.

Кăçал çуралнă мĕнпур çамрăк выльăхсем шутĕнчен 1941 çулти июнĕн 10-мĕш тĕлне тихасем 3,4 процент, пăрусем — 4,6 процент, сысна çурисем—3,8 процент, путексем — 3,2 процент вилнĕ. Çамрăк выльăхсене кирлĕ пек пăхса усраман пирки «Сеялка» колхозра 24 çăвăртан 6 çăвăр, «Восток» колхозра 50 çăвăртан 19 çăвăр, «Большевик» колхозра 90 çăвăртан 20 çăвăр вилнĕ. Выльăхсене сыхлас ĕç çине кирлĕ пек пăхман пирки, Мичурин ячĕпе тăракан колхозра пĕр кăçхине кашкăрсем 21 сурăха тата 29 путеке вĕлерсе тухнă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре чылай çитменлĕхсем пур пулин те, районри руководительсем вĕсене пĕтерессипе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. ВКП(б) райкомĕ тата райсовет исполкомĕ СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) кăçалхи мартăн 13-мĕшĕнче йышăннă постановленине колхозсенче пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен сÿтсе-явман, асăннă çитменлĕхсене пĕтерес пирки конкретлă мерăсем йышăнман. Районри çĕрĕç пайĕ колхозсенче учет ĕçĕ начар тăнине пĕлет пулин те, колхозри счетоводсемпе халиччен пĕр канашлу та туса ирттермен, учет ĕçне аванлатасси пирки кăтарту паман.

Çĕнĕ закона пурнăçа кĕртес ĕçри пур пек çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле, колхозсен обществăллă хуçалăхне пур майсемпе те вăйлатса пырассишĕн çине тăрса кĕрешмелле.

А. МИТРОФАНОВА.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн инструкторĕ.

Ачашларĕ ăш хĕвел

(Тăшă такмакĕсем)

Ачашларĕ ăш хĕвелĕ,
Çупăрларĕ сăрт питне;
Хут купăсĕ пит те меллĕн
Илĕртет-çке хăй патне.

Шурă, теççĕ, чечек, теççĕ,
Улма йывăç чечекне;
Пит те, теççĕ, паха, теççĕ,
Çамрăксенĕн вăййине.

Хур кайăк пек кар тăрар-и,—
Карталанăр, çамрăксем:
Янраттарса юрă юрлар-и,
Тап-ташлар-и, тантăшсем!

Шап шур тумлă хурăнне те
Яштак ÿсни килĕшет,
Çавтер савăк кунсенче те
Савăнни те килĕшет.

Авăтать-çке путенийĕ,—
Ешĕл хире юратать.
Пирĕн çĕршыв çамрăкĕ
Ташлама та юратать.

Н. ВАÇАНККА.

◆

Сиенлĕ лăплану

КУКЕÇ. Пĕррмĕш кварталти финан планне 119 процент тултарса, Шупаш кар районĕ республикăра виççĕмĕш вы рăна тухрĕ. Çак çитĕнĕве çирĕплете сишĕн кĕрешесси финанс работник семшĕн хисеплĕ задача пулмалла пе Анчах та ĕçре йăлтах тепĕр майлĕ Иртнĕ кварталта тунă ÿсĕм финан работникĕсене лăплантарчĕ. Çавна пу ла икĕ уйăх та вунă кун хушшинч квартал планне 83,2 процент тултарса район республикăра 27-мĕш вырăн чакса ларчĕ.

Çакна калас пулать: иккĕмĕш квар талти план пĕррмĕш кварталти пла нăн çурри ытларах кăна. Уйрăмăна рабочисемпе служащисенчен подоход нăй налог тата культсбор укçи пуха ĕç юлса пырать. Пĕтĕмпе те 52 про цент çеç тултарнă. Çав вăхăтрах культ сбор тата подоходнăй налог укçи фи нанс планĕнче 50 процента яхăн йы шăнать. Ку укçана камран, хăш уч режденирен мĕн чухлĕ илмеллине рай финпайĕ пĕлмест. Мĕншĕн тесен, ра бочисемпе служащисен ĕç укçи фонд не тĕрĕс шута илсе тухман.

Перекет касси вкладсем пухас тĕ лĕшпе квартал планне пĕтĕмпе те 1 процент çеç тултарнă. Комсодсем кол хозниксем хушшинче массăллă-ăнлан тарулла ĕçе куллен туса пынă пу сан, вкладчиксен йышĕ ÿссе пын пулĕччĕ.

Чăнах та районра хăшпĕр ялсове сем финанс планне тултарассишĕн т рăшса ĕçлеççĕ. Акă, Солянова ялсовеч плана 157 процент, Паçпак ялсовеч 126 процент, Кочаково ялсоветĕ 1 процент тултарнă. Çав вăхăтрах ирт вăхăтра малти вырăнта пыракан З водской ялсоветĕ плана 49 процен çеç тултарнă. Карачура ялсоветĕ кайри вырăнта пырать, вăл плана 23 процент кăна тултарнă. Иртнĕ вун кунлăхра ку ялсоветра пĕр пус пухман. Темиçе çул хушши ĕнтĕ К рачура ялсоветĕ укçа-тенкĕ пухас т лĕшпе прорывран тухаймасть. Едини личник-хресченсем çинче кăна 76 тенкĕ недоимка шутланса тăрать. Па лах, районри работниксен финанс аге чĕсем çине çеç шанса ларма кирл мар. Çак ялсовета пулăшмалла. Анча та финанс работникĕсем ăçта ĕç нача пырать, унта сахалтарах пулаççĕ.

Тепĕр юлса пыракан ялсовет вăл Сарабакасси ялсоветĕ. Кунта пла 31,4 процент кăна тултарнă. Ялсове тĕнче иртнĕ вунă кун хушшинче пĕ пус та пухман. Финанс агенчĕ Але сеев юлташ — çĕнĕ работник, ĕçе х нăхман темелле, анчах та хăйне ша са панă ĕçшĕн тăрăшни пачах та к рăнмасть. Кунĕ-кунĕпех ялсовет ка целяринче ларать. Ялсене тухса çÿр мест, укçа тÿрех, хăй тĕллĕнех пыр кĕрессе шанать.

Тр. ЛОГИНОВ.

Панă сăмаха пурнăçларĕç

ÇЕМЕРЛЕ. (**Чăваш Коммуни» корр.**) Ширшов ячĕпе тăракан артель кăçа хи 5 уйăхри производствăллă програ мăна 119,7 процент тултарчĕ.

Производствăллă программăна тулт рас тĕлĕшпе массовăй пошив та пуканесем тăвакан цехсем малта пы раççĕ. Вĕсем дзержинецсен чĕнĕвн сÿтсе-явса çурçул планне срокчен ту тарма пулнă. Çак обязательствăн ăнăçлăн пурнăçларĕç.

Массовăй пошив цехĕн кăçал ма танхи çурçулта 173 пин тенкĕлĕх тĕ лĕрен япаласем çĕлесе кăлармал пулнă, вăл 5 уйăх хушшинчех 213 пи тенкĕлĕх çĕлесе кăларнă. Пуканесе тăвакан цех çурçулти плана 114 пр цент пултарчĕ.

Рабочисемпе работницăсем ăмăртăв сарсах пыраççĕ. Вĕсем хушшинч нормăна тултарса ĕçлейменнисен хис пĕ чылай чакрĕ. Паллă стахановкăсе Маланина, Вахлачева куллен нормăс не 140—142 процент, Радникова — 1 процент, Евдокимова — 165 процен тултараççĕ.

Юлашки вăхăтра Чăвашшвейпро союз артеле чĕртавар япăх парса тăм пуçларĕ. Çакă вара ĕçре пысăк чăрма кÿрет. Чĕртавар пулман пиркие июнĕн 11—12-мĕшсенче белошвейнă цех ĕçлеймерĕ.

Пĕр кун хушшинче 19.550 тенк выляв укçи тÿленĕ

Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çу хи кăларăм) Заемĕн çак кунсенч пулса иртнĕ пĕррмĕш тиражĕнч выигрышсен таблицине илсенех Шу пашкар хулинчи перекет кассисем вы ляв укçине тÿлеме тытăннă.

Малтанхи кунне, июнĕн 16-мĕшĕнч Шупашкар хулинчи ĕçсыннисене 19.55 тенкĕ выляв укçи тÿленĕ.

Çавăн пекех районсенчи перекет ка сисенче те выляв укçи тÿлесси пысă çĕкленÿпе иртсе пырать.

Германипе Турци хушшинче туслӑх ҫинчен тунӑ договор

БЕРЛИН, июнӗн 18-мӗш. (ТАСС). Германири информаци бюровӗ ҫапла пӗлтерет: июнӗн 18-мӗшӗнче 21 сехетре Анкарара Германипе Турци хушшинче туслӑх ҫинчен договор тунӑ. Договора Германи посолӗ фон Папен тата Турци ютҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Сараджоглу алӑ пусса ҫирӗплетнӗ.

Договор текстӗ ҫакӑн пек:

«Германи империйӗпе Турци республики, икӗ ҫӗршыв хушшинче пӗр-пӗрне шаннипе чӑн-чӑн туслӑх бази ҫинче ҫирӗпленсе тӑракан отношенисем туса йӗркелес кӑмӑлпа хавхаланса ҫӗкленсе, ҫак договор икӗ ҫӗршывӑн хальхи вӑхӑтри обязательствине хисеплени ҫинчен каласа хӑварса, договор тума шутланӑ. Ҫак шутпа хӑйсен уполномоченнӑйӗсем пулма ҫаксене уйӑрса лартнӑ: Германи рейхсканцлерӗ — посола Франц фон Папена; Турци республикин президенчӗ — ютҫӗршыв ӗҫӗсен министрне Шюкрю Сараджоглуна, вӗсем хӑйсене панӑ полномочисем тӑрӑх ҫакӑн ҫинчен калаҫса татӑлнӑ:

1 статья. Германипе Турция хӑйсен национальнӑй территорийӗсен тӗрӗс-тӗкеллӗхне тата никам пырса тӗкӗнмелле мар положенине пӗр-пӗри хисеплеме, калаҫса татӑлакансенчен пӗрине, тӳрех е мӗнле те пулин урӑхла майпа, хирӗҫ пыракан нимӗнле мерӑсем те йышӑнмасӑр тытӑнса тӑма пулаҫҫӗ.

2 статья. Германипе Турция малашне пӗр-пӗрин интересӗсене тивекен пӗтӗмпур ыйтусем тӑрӑх, ҫав ыйтусенче килӗшӳллӗх тӑвас тесе, туслӑ контакт тытса тӑма пулаҫҫӗ.

3 статья. Ҫак договора ратификацилеҫҫӗ, ратификаци грамотисене Берлинра чи кӗске срокра улӑштарса илеҫҫӗ. Договор ӑна алӑ пусса ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн вӑй илет, 10 ҫул хушши унӑн вӑйне ҫухатмасть. Юрӑхлӑ вӑхӑт илсе ҫитсен калаҫса татӑлакан енсем договора малалла тӑсасси ҫинчен килӗшӳ тӑваҫҫӗ. Договора икӗ экземплярпа, нимӗҫ тата турци чӗлхисемпе ҫырса хатӗрленӗ. 1941 ҫулти июнӗн 18-мӗш».

Германипе Турци правительствисем хушшинче нотӑсем улӑштарса илни

БЕРЛИН, июнӗн 18-мӗш. (ТАСС). Германири информаци бюровӗ ҫапла пӗлтерет: «Германипе Турци хушшинче туслӑх ҫинчен договор тунипе пӗр вӑхӑтрах, фон Папенпа Сараджоглу Германипе Турци правительствисен хушшинче икӗ ҫӗршыв хушшинчи хуҫалӑхлӑ отношенисем пирки ҫакӑн пек нотӑсем улӑштарса илнӗ:

«Паян Германипе Турци хушшинче телейлӗн договор тунӑ май, эпӗ сирӗн превосходительствӑна ҫакӑн ҫинчен пӗлтеретӗп: манӑн правительство, май килнӗ таран, Германипе Турци хушшинчи хуҫалӑхлӑ отношенисене вӑйлатмашкӑн пулӑшма шутлать, ҫак ӗҫе икӗ ҫӗршывӑн экономикӑллӑ структуринчи пур пек майсене шута илсе, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче илнӗ, икӗ ҫӗршывӗшӗн усӑллӑ опыт никӗсӗ ҫинче тума шутлать. Ҫак килӗшӗве пурнӑҫа кӗртме май килнӗ таран кӗске срокра договорлӑ база тӑвас тесе, икӗ правительстви те ҫывӑх вӑхӑтрах калаҫусем пуҫлаҫҫӗ».

Малалла, договора алӑ пусса ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн, хаҫатсем урлӑ тата икӗ ҫӗршыври радио тӑрӑх икӗ енӗ пӗрле ҫакӑн пек заявлени панӑ: телейлӗн договор тунӑ май, икӗ енӗн уполномоченнӑйӗсем пӗр-пӗрне ҫакӑн ҫинчен каланӑ: икӗ ҫӗршыври хаҫатсем, ҫавӑн пекех радио та, хӑйсен пӗлтерӗвӗсемпе радиопередачисенче Германипе Турци хушшинчи отношенисенчи туслӑха тата пӗрне-пӗри шанса тӑнине паллӑ туччӑр, тенӗ.

ЕВРОПӐРИ, АФРИКӐРИ ТАТА АЗИРИ ВӐРҪӐ

(Вӑрҫӑ ӗҫӗсен дневникӗ)

Англипе Германи хушшинчи фронтра авиацин хӑшпӗр активлӑхӗ палӑрать. Германи командованийӗн сводкинче каланӑ тӑрӑх, Германи авиацийӗ Хӗвелтухӑҫ тата Кӑнтӑр-Хӗвелтухӑҫ Англири аэродромсем, зенитнӑй батарейӑсем тата портсен сооруженийӗсем ҫине бомбӑсем пырса пӑрахнӑ. Ҫавӑн пекех Германин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен тинӗс ҫинчи операцийӗсем пулса пынӑ. Атлантика океанӗнче Германин подводнӑй лодкисем Англин суту-илӳ тумалли 5 пароходне путарни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ.

Июнӗн 17-мӗшӗнче каҫхине, тесе пӗлтерет Рейтер агентстви, Англи самолечӗсем Германин Ла-Манш проливӗнчи тӗрлӗ суднисем ҫине, ҫавӑн пекех тата Ҫурҫӗр Францири хӑшпӗр объектсем ҫине пырса тапӑннӑ. Ыран июнӗн 19-мӗш тенӗ чух ҫӗрле Англи самолечӗсен соединенийӗсем Хӗвеланӑҫ Германи ҫине пырса тапӑннӑ. Англи самолечӗсем пуринчен ытларах Кельнпа Дюссельдорфри промышленноҫлӑ предприятисем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

* * *

Вӑтаҫӗр тинӗсӗн бассейнӗнче Итали авиацийӗ Мальта утравӗ ҫине бомбӑсем пырса пӑрахнӑ. Ыран июнӗн 18-мӗш тенӗ чух ҫӗрле, тенӗ Итали командованийӗн сводкинче, Итали бомбардировщикӗсем Микабба, Хальфар тата Венеция аэродромӗсем ҫине пырса тапӑннӑ.

Юнайтед пресс агентствин Мадридри корреспонденчӗ ҫапла пӗлтерет: англичансем Гибралтар проливӗн шывӗсем ҫине шыв айӗнче ҫуралакан бомбӑсем пӑрахнӑ, мӗншӗн тесен унта Италин подводнӑй лодкисем пур пулмалла.

Ҫурҫӗр Африкӑра, Соллум секторӗнче, тенӗ Германи командованийӗн сводкинче, Египет чикки патӗнче англичансем бронетанковӑй пысӑк чаҫсем пулӑшнипе Германи фронтне татса каҫма хӑтланнӑ, анчах та вӗсен ӗҫӗ ӑнӑҫсӑр пулнӑ. Англи войскисен атакине сирсе янӑ. Германипе Итали авиацийӗ, тенӗ малалла сводкӑра, ҫапӑҫусене активлӑн хутшӑннӑ. Англи командованийӗ кӑларнӑ коммюникере каланӑ тӑрӑх, Англин Ливипе Египет хушшинче кӗрешекен войскисем кӗтмен ҫӗртен наступлени пуҫланӑ, Капуццо форчӗ патне пырса ҫитнӗ (чикӗ патӗнчен Ливи енче). Англин Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫӗнчи сывлӑш вӑйӗсен командованийӗ кӑларнӑ коммюникере каланӑ тӑрӑх, Британи авиацийӗн самолечӗсем Киренаикӑра ҫӗр ҫинчи войскисене ҫапӑҫусенче активлӑн пулӑшнӑ. Англи бомбардировщикӗсем Бенгази гаванӗ ҫине, Дернӑри, Мартубӑри тата Эль-Газалӑри аэродромсем, самолетсене лартмалли площадкӑсем ҫине татах тепӗр хут бомбӑсем пырса пӑрахнӑ. Тинӗс авиацийӗн самолечӗсем Германипе Итали чаҫӗсен Бардире пухӑнса тӑнӑ автомашинисем ҫине пырса тапӑннӑ.

Хӗвелтухӑҫ Африкӑра, Абиссинире, улшӑнусем пулман.

* * *

Сирире Франци войскисен контрнаступленийӗ сарӑлса пырать. Мерджайунпа Эль-Кунайтра районӗсенче хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Июнӗн 17-мӗшӗнче, тенӗ Рейтер агентствин пӗлтерӗвӗнче, Франци отрячӗсем Израна, Мерджайуна тата Эль-Кунайтрӑна англичансенчен каялла туртса илнӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Англи войскисем французсене Израран хӗссе кӑларнӑ. Тепӗр икӗ пункчӗ патне пырса кӗмелли вырӑнсенче ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ.

Рейтер агентствин ятарласа кайнӑ корреспонденчӗ, Англин Сирири войскисемпе пӗрле ҫӳрекенскер, ҫапла пӗлтерет: Франци чаҫӗсен контрнаступленийӗ июнӗн 16-мӗшӗнче 15 сехет те 30 минутӑра англичансем пачах та кӗтмен ҫӗртен пуҫланнӑ. Наступлени пуҫлас умӗн Франци артиллерийӗ Мерджайун ҫине, порт ҫине тата ҫулсем пӗр-тӗрин урлӑ каҫса каякан вырӑнти паха пункт ҫине вӑйлӑн персе тӑнӑ, ҫакӑн хыҫҫӑн танксемпе пехота наступлени тума пуҫланӑ.

Ҫавӑн пекех Дамаск районӗнче те хаяр ҫапӑҫусем сарӑлса пыраҫҫӗ. Рейтер агентстви Каиртан пӗлтернӗ тӑрӑх, Англи войскисем ҫӗнӗрен чылай пунктсене туртса илнӗ. Дамаск хули вырнаҫса тӑракан айлӑмра пысӑк вырӑнта тӑракан высота хальхи вӑхӑтра Англи чаҫӗсемпе де Голль генералӑн войскисен аллинче. Союзниксен войскисем хула патнелле хуллен ҫывхарса пыраҫҫӗ.

Гавас—ОФИ агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Ливан ҫыранӗнче Австрали войскисем Сайдӑна туртса илнӗ хыҫҫӑн малалла кайман, хӑйсен вӑйӗсене ҫӗнӗ наступлени пуҫлама йӗркелесе хатӗрлеҫҫӗ пулмалла. Рейтер агентствин пӗлтерӗвӗнче ҫапла каланӑ: Англин ҫак районра кӗрешекен войскисем Сайда патӗнчен ҫурҫӗр еннелле 6 километр малалла кайнӑ, малта пыракан патруль отрячӗсем Бейрут патӗнчен 20 километртра вырнаҫса тӑракан пункта ҫитнӗ.

Июнӗн 18-мӗш. (ТАСС).

Францин оккупациленӗ зони ҫинчен калакан цифрӑсем

ВИШИ, июнӗн 18-мӗш. (ТАСС). «Францири пӗтӗмӗшле статистика бюллетенӗн» даннӑйӗсем тӑрӑх, оккупациленӗ зона Францин пӗтӗм территорийӗн 55 процентчӗ пулса тӑрать. Оккупациленӗ зонӑра Франци халӑхӗн 67 проценчӗ (28 миллион ҫын) тата тара кӗрӗшсе ӗҫлекен работниксен 80 проценчӗ пурӑнать. Пулӑ тытас ӗҫӗн 97 проценчӗ, акнӑ тулӑн 74 проценчӗпе ҫӗрулмин 70 проценчӗ оккупациленӗ зона ҫине ӳкет. Францири мӗнпур выльӑх-чӗрлӗхӗн 75 проценчӗ — оккупациленӗ зонӑра.

КӖСКЕН

▲ Франци авиацийӗн статс-секретарӗ генерал Бержере Франции сывлӑшри вӑйӗсене пӑхса тухма Сирине самолетпа вӗҫсе пынӑ.

▲ Сири ҫыранӗсем патӗнче операцисем вӑхӑтӗнче Франци эсминецне путарнӑ.

▲ Цейлон правительствин шалти ӗҫсен министрӗ ҫапла пӗлтернӗ: Цейлонра ӗҫсӗрлӗх пысӑк проблема пулса тӑрать. Пӗр Коломбо хулинче (Цейлон столицинче) кӑна ӗҫсӗррисем 40 пин ҫын шутланаҫҫӗ.

▲ 1939—40 ҫулта Индирен Японине 1.211 пин кипа ҫӗрмамӑк илсе кайнӑ пулсан, 1940—41 ҫулта 1.056 пин кипа илсе кайнӑ. Японирен Индине илсе пыракан пиравӑр таварӗсен хисепӗ 21,6 миллион рупий чухлӗ чакнӑ.

Лермонтов, Навои тата Низами ҫырнӑ произведенисем Узбекистанра

Навои, Лермонтов тата Низами юбилейӗсем умӗн Узбекистанра аслӑ поэтсем ҫырнӑ произведенийӗсене пичетлесе кӑлараҫҫӗ. Художествӑллӑ литература издательствинче Лермонтовӑн суйласа илнӗ произведенийӗсенчен виҫӗ том туса кӑлараҫҫӗ, вӗсене узбек чӗлхи ҫине куҫарнӑ. Ҫак издательствах Навоин лирикӑллӑ сӑввисен сборникне кӑларать.

Низами юбилейӗ тӗлне «Хосров и Ширин» поэмӑна узбекла куҫарса кӑлараҫҫӗ.

Театр самодеятельноҫӗн республикӑри смотрӗ

Вуннӑмӗш кун

Июнӗн 18-мӗшӗнче Пионерсен ҫуртӗнче Тускелти (Елчӗк р.) «Трактор» колхозӑн драмкружок членӗсем хӑйсен выступленине пачӗҫ. Вӗсем республикӑн искусствӑна тава тивӗҫлӗ деятелӗ Н. Айзман ҫырнӑ «Утне ҫитмен туртине» ятлӑ комедине лартрӗҫ. Комедине лартнӑ чух выляканӗсем хӑшпӗр тӗлте йӑнӑшсем турӗҫ пулсан та, вӗсене куракансем тулли кӑмӑлпа пӑхса ларчӗҫ.

Комедире колхозниксемпе колхозницӑсем ытларах вылярӗҫ. Вӗсен вӑййинче колхозлӑ ялӑн ҫамрӑкӗсем искусствӑна аванах ӑнланнине, вӗсем театр ӗҫне юратнине туйса илетӗн.

Микита рольне вылякан учитель В. Иванов юлташ хӑйӗн рольне тарӑннӑн ӑнланса илнӗ. Унӑн сӑнарӗнче, хусканӑвӗсенче, калаҫнисенче—вӑл ҫӗнӗ пурнӑҫа юратакан тӳрӗ колхозник иккенне аванах курма пулать. Анчах та Иванов юлташӑн ҫитменлӗхсем те пулчӗҫ.

Варвари ролӗнче колхозница Г. Зайцева аван вылярӗ.

Вӗсен хӗрӗ Шӑпчӑкӑн образӗ А. Алтынова вӑййинче малтанах кирлӗ пек тухмарӗ. Шӑпчӑк, хастарлӑ та ырӑ хӗр пулмалласкер, хӑйне ҫиллеслӗн, ҫавӑрӑнӑҫусӑр тыткаларӗ. Шӑпчӑкӑн образӗ комедин юлашки пайӗсенче тин куракан умне тӗрӗсрех тухса тӑчӗ. Вӑл хаваслӑ хӗр, пурнӑҫа юратать, хастарлӑ.

Смелов ролӗнче В. Павлов вылять. Пирӗн шутпа Смелов, тӑван ҫӗршывшӑн ҫапӑҫса орден илнӗскер, хӑйне паттӑррӑн тыткаламалла ӗнтӗ. Чӑн та, Смеловӑн хӑшпӗр тӗлте хӑйне хӑюсӑррӑн тытмалла, анчах пур ҫӗрте те мар. Павлов юлташ Смелов образне пур ҫӗрте те хӑюсӑртарах тытнӑ пек кӑтартрӗ. Ҫапах та Павлов япӑх вылярӗ тесе каласшӑн мар эпир. Вӑл чи малтан хӑйӗн тантӑшӗсемпе тӗл пулнӑ чух е тата туйра сӑмах каланӑ чух хӑйне чӑн-чӑн патриот пек сӑнларӗ.

Куракансемшӗн пуринчен ытла евчӗ Маври образӗ интереслӑ пулчӗ. Унӑн рольне колхозница М. Зайцева лайӑх выляса пачӗ. Вӑл хӑйне халь те кивӗ пурнӑҫӑн йӑлипе пурӑнакан, ҫук сӑмахран пур сӑмах туса вашкӑртса ҫӳрекен, ҫынӑн туприйӗпе ҫеҫ пурӑнасшӑн тӑрӑшакан ҫын пек тыткаларӗ.

Маври чее, анчах та айван. Унӑн чеелӗхне ҫӗнӗ пурнӑҫӑн ҫӗнӗ ҫыннисем часах туйса илеҫҫӗ... Акӑ вӑл алӑкран майӗпен йӑпшӑнса кӗрет. Чӗлхи те ҫемҫе те, анчах ӑна пирӗн ҫынсем сивӗ куҫпа кӗтсе илеҫҫӗ.

Ытти юлташсем те: Н. Сергеев, К. Шашков, Н. Зайцева, Н. Смирнов т. ыт. те лайӑх вылярӗҫ.

Колхозниксен ҫак коллективӗнчен татах та лайӑхрах выляссине кӗтме пулать. Ку ӗнтӗ вӗсем хӑйсен пултарулӑхне ӳстерессишӗн куллен тӑрӑшнинчен килет.

Ровно облаҫӗнчи музей

Ровно облаҫӗнчи хуласемпе ялсенче 10.000 ҫынна вӗрентмелӗх 45 шкул туса пӗтернӗ. Ҫӗнӗрен тунӑ 12 шкулта поляксен ачисем вӗренмелле пулаҫҫӗ. Ҫак шкулсенче вӗсене поляк чӗлхипе вӗрентеҫҫӗ.

Поляксен социализмлӑ культурине аталанса вӑйланма кирлӗ условисене пӗтӗмӗшпех туса панӑ. Хальхи вӑхӑтра облаҫра поляксен вӑтам тата тулли мар вӑтам шкулсем 145, клубсемпе вулав ҫурчӗсем 86, библиотекӑсем 60 шутланаҫҫӗ. Культура учрежденийӗсен хисепӗ кашни кун ӳссе пырать. Пӗр Людвиполь районӗнче кӑна юлашки вӑхӑтра ҫӗнӗрен 4 клуб тата 6 вулав ҫурчӗ уҫӑлнӑ. Поляксен хорпа драмӑн самодеятельнӑй кружокӗсем 180 кружок ӗҫлеҫҫӗ.

ПУЛНИ-ИРТНИСЕМ

Луцк ялӗнчи (Комсомольски р.) 11—15 ҫулхи ачасем — А. В. Свистунов, Н. Соколов, А. Лобанова тата С. Николаев ялти лавкаран 12 коробка шӑрпӑк илнӗ те, шӑрпӑк пуҫӗсенчен заряд туса пистолетпа пеме пуҫланӑ.

Ҫакӑн пек ашкӑнса, вӗсем А. Русанова колхозницӑн пӑлтӑрӗ ҫине икӗ хутчен пенӗ. Пӑлтӑр тӑррине улӑмпа витнӗ пулнӑ, вут хӗлхемӗ улӑм ҫине сирпӗнсе ӳкнипе, пӑлтӑра вут хыпса илнӗ. Часах вут кӳршӗри П. Николаевӑн ҫурт-йӗрне те ҫавӑрса илнӗ.

Вутра Русанова пӑлтӑрӗ тата Николаевӑн ҫурт-йӗрӗсем ҫунса кайнӑ.

Хӑйсен ачисене ҫапла ашкӑнса ҫӳреме ирӗк панӑшӑн, ашшӗ-амӑшсене ответ тыттараҫҫӗ.

Семинар

Паян, июнӗн 20-мӗшӗнче, ВКП(б) Шупашкар горкомӗн парткабинетӗнче предприятисен руководителӗсен экономикӑллӑ образованийӗ тӑрӑх семинар пулать, семинарта **«Промышленноҫлӑ предприятин балансӗ тата ӑна анализ тӑвасси»** темӑпа лекци вулаҫҫӗ. Лектор — **Вечтомов** юлташ.

Семинар каҫхине 8 сехетре пуҫланать.

ПАРТКАБИНЕТ.

Ответлӑ редактор

В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТИПОГРАФИЯ „ПОЛИГРАФШТАМП“

г. Чебоксары, Дом печати, тел. 5—32.

ИЗГОТОВЛЯЕТ

штампы, печати, штемпеля из каучука. Металлические клейма по дереву, коже, металлу и белью. Сургучные печати, пломбирные щипцы, трафареты, факсимиле.

Серебрянные жетоны, карточки. Гравировка на металлах.

Из белой и цветной жести производятся штамповочные №№, знаки, марки для гардероба, табеля, инвентарь.

Стальные штампы, клейма, конвенционные медные и почтовые железные календари.

Художественные клише и монограммы.

Штампы и печати выполняются по разрешениям органов милиции НКВД. Прочие заказы по письменным заверенным заявкам организаций и лично по запросу заказчика на месте в типографии.

По специальным и массовым заказам вызывайте к тел. 5—32 старшего мастера.

Типография работает с 8 ч. утра до 5 ч. вечера с перерывом с 12 ч. до 1 ч. дня.

Администрация.

К СВЕДЕНИЮ

автохозяйств, обозохозяйств, водителей машин и населения Чувашской АССР.

Согласно утвержденных 4 января с. г. Совнаркомом Чувашской АССР „Правил охраны автогужевых дорог Чувашской АССР“—

ЗАПРЕЩАЕТСЯ:

ГУЖЕВОЕ ДВИЖЕНИЕ по черному и белому шоссе во всякое время года;

ДВИЖЕНИЕ ТРАКТОРОВ всех марок по всем мостовым, гравийным дорогам, черному и белому шоссе;

ДВИЖЕНИЕ ВСЕХ ВИДОВ ЭКИПАЖЕЙ по улучшенным грунтовым дорогам государственного и межрайонного значения в период весенней и осенней распутицы и в период сильных дождей до просыхания дорог;

КУПАНИЕ, ПОЛОСКАНИЕ БЕЛЬЯ И ЛОВЛЯ РЫБЫ с мостов, у опор мостов и ледорезов;

ЗАСОРЕНИЕ отверстий мостов и труб, а также дорожных канав, резервов, обочин и какое-либо загрязнение дорог и дорожных сооружений;

ПАСТЬБА СКОТА в пределах полосы отвода;

Фотографирование дорог и сооружений без ведома дорожных органов и без установленных разрешений;

ЕЗДА ПО ОБОЧИНАМ, за исключением раз'ездов встречных экипажей на однопутных дорогах;

ПЕШЕХОДНОЕ ДВИЖЕНИЕ по проезжей части дорог и мостов;

ЗАПАХИВАНИЕ ПОЛОСЫ ОТВОДА, рубка насаждений, рытье земли и выемка грунта в полосе отвода для каких бы то ни было целей;

СБОР ЯГОД И ПЛОДОВ с посадок, расположенных в полосе отвода;

КУРЕНИЕ НА МОСТАХ деревянных и с деревянным настилом, а также на всех переправах;

РАЗВЕДЕНИЕ ОГНЯ под мостом и ближе 100 метров от мостов деревянных и с деревянным настилом;

ЗАПРАВКА ТОПЛИВОМ, продувка топок, выгребание золы и шлака при переходах через мосты;

РАЗЪЕЗД НА МОСТАХ экипажей с механической тягой;

ПРОГОН СКОТА по дорогам допускается при соблюдении следующих требований: скот перегоняется по дорогам и через мосты небольшими партиями, допускающими легкий надзор за ним; при наличии об'ездного пути или пригодных для пропуска скота об'ездов, скот перегоняется только по ним; при отсутствии об'ездных путей скот перегоняется только по проезжей части дороги, причем возможно дальше от обочин и от откосов дорожного полотна.

ПО ЧЕРНОМУ И БЕЛОМУ ШОССЕ ПРОГОН СКОТА НЕ ДОПУСКАЕТСЯ НИ В КОЕМ СЛУЧАЕ, КРОМЕ КАК ПРИ НЕИЗБЕЖНОМ ПЕРЕСЕЧЕНИИ ЭТИХ ДОРОГ. ПО ТРАКТУ ЧЕБОКСАРЫ—КАНАШ ПРОГОН СКОТА РАЗРЕШАЕТСЯ ТОЛЬКО С СОГЛАСИЯ ДОРОЖНОГО УПРАВЛЕНИЯ.

ЗА НАРУШЕНИЕ правил охраны дорог взимается в административном порядке **ШТРАФ** в размере до 100 рублей.

Кроме того, в надлежащих случаях лица, виновные в нарушении правил охраны дорог, привлекаются к уголовной ответственности с возмещением материального ущерба.

Правила охраны автогужевых дорог имеются в каждом дорожном органе.

2—2 Дорожное Управление при СНК Чувашской АССР.

БОРЬБА ЗА ОХРАНУ СОЦИАЛИСТИЧЕСКОЙ СОБСТВЕННОСТИ И ЛИЧНОГО ИМУЩЕСТВА ГРАЖДАН ОТ ПОЖАРА — ДЕЛО ВСЕХ ТРУДЯЩИХСЯ НАШЕЙ РОДИНЫ.

ГРАЖДАНЕ!

ОТ ШАЛОСТИ ДЕТЕЙ С ОГНЕМ ЧАСТО ВОЗНИКАЮТ ПОЖАРЫ, КОТОРЫЕ НЕРЕДКО ПРИВОДЯТ К ГИБЕЛИ САМИХ ДЕТЕЙ И НАНОСЯТ БОЛЬШОЙ УЩЕРБ ВАМ И ГОСУДАРСТВУ.

НЕ ОСТАВЛЯЙТЕ ДЕТЕЙ БЕЗ ПРИСМОТРА, НЕ ПОЗВОЛЯЙТЕ ИМ ИГРАТЬ СО СПИЧКАМИ, С САМОСТРЕЛАМИ, РАЗ'ЯСНЯЙТЕ ИМ ОПАСНОСТЬ ОГНЯ.

Убирайте спички от детей в недоступные для них места.

За шалости детей с огнем отвечают их родители.

Комсомольцы и пионервожатые, организуйте детей на охрану социалистической собственности от огня.

Председатели колхозов и сельисполкомов, организуйте полный охват детей детскими площадками и детсадами.

Отдел пожарной охраны НКВД Чувашской АССР.

Программа радиопередач

Ст. РВ—74, в. 943 м., время местное. **24 июня** 18.45—Оборонный выпуск «Последних известий». 21.30—Лекция: «О расширенном социалистическом воспроизводстве».

Все передачи — на чув. яз.

Чувашский Республиканский Комитет профсоюза работников начальной и средней школы центра просит исполкомы сельских советов и директоров средних школ не позднее 5-го июля представить в РОНО для передачи союзу расчетные ведомости ф. № 33 по взносам Соцстраха за технический персонал начальных, Н Ш и средних школ, а также внести до 1 июля на субтекущий счет ЦК союза № 158085 по тарифу 5,8% причитающиеся за июль и не уплаченные за прежнее время страховые взносы.

ЦЕНТРОЭЛЕКТРОМОНТАЖУ

в г. Чебоксарах

ТРЕБУЮТСЯ

рабочие следующих квалификаций:

СЛЕСАРИ,
МОНТЕРЫ,
МОНТЕРЫ ЛИНЕЙЩИКИ

Оплата труда сдельная.

С предложением обращаться: г. Чебоксары, Водосвет, д. № 1, кв. 3, к Шеронову.

2—1

Чебоксарская акушерская школа

с отделением санитарных фельдшеров и медицинских лаборантов Наркомздрава Чувашской АССР на 1941—42 учебный год об'являет прием учащихся на 1 курс.

Школа готовит акушерок, лаборантов для лечебных учреждений и санитарных фельдшеров для Чувашской республики.

Срок обучения три года, на отделении лаборантов—два года.

В школу принимаются лица обоего пола в возрасте от 15 до 35 лет, имеющие общеобразовательную подготовку не менее семи классов средней школы.

Все поступающие подвергаются приемным испытаниям по математике (арифметике, алгебре, геометрии), физике, географии, русскому языку и политграмоте.

Прием заявлений производится с 10 июня по 25 августа 1941 года.

Приемные испытания с 10 по 25 августа.

Начало занятий с 1 сентября

БЕЗ ИСПЫТАНИЙ ПРИНИМАЮТСЯ: окончившие полную среднюю школу (десятилетку, рабфак, техникум) и отлично окончившие семилетку по основным предметам (кроме рисования, пения, черчения, физкультуры).

Заявления подаются на имя директора с приложением следующих документов (в подлинниках):

а) свидетельство об образовании,
б) свидетельство о рождении, выданное органами ЗАГС,
в) две фотокарточки с собственноручной подписью на них.

Кроме того, поступающие в возрасте от 16 лет и выше пред'являют лично свой паспорт.

Для ответа при подаче заявлений должны быть приложены почтовые марки на 60 коп

Лица, допущенные к испытаниям, будут вызваны специальным извещением.

Принятые в школу по нуждаемости обеспечиваются общежитием и стипендией на общих основаниях.

АДРЕС: г. Чебоксары, улица Ленина, поселок Волгостроя, Санитарно-фельдшерско-акушерская школа.

3—1 ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редактор заместителӗн — 3—97, редакци секретарӗн — 4—40, пропаганда пайӗн — 4—97, парти пурнӑҫ пайӗн — 7—97, экономика пайӗн — 0—88, ҫырусемпе рабселькорсен пайӗн — 2—30, «Ӗҫхӗрарӑмӗ» тата «Хатӗр пул» журналсен — 6—23, «Ленин ҫулӗпе» 2—85, издательство конторин—0—23.

НТ 4031 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 293, Ф. 6. 58 84 п. л.